24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1941 июль 19 шаматкун 168 (5883) №

Чăваш Коммуни

ВКП(б) обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн, ЧАССР Верховнăй Совечĕн тата Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ.

Хĕрарăм колхозра — пысăк вăй

Колхозлă ял — çирĕп тыл. Колхозниксемпе колхозницăсем — ватти те, çамрăкки те — пурте тăван çĕршыва сыхлама тăчĕç. Вĕсем хăйсене хăйсем социализмлă çĕршывăн боецĕсем тесе шутлаççĕ. Вĕсем хушшинче ополчени ретне тăракансен хисепĕ хăвăрт йышланса пырать. Колхозри труженниксем тыла çирĕплетес, Хĕрлĕ Çара пулăшас майпа государство умĕнчи обязательствăсене срокчен тултараççĕ, пур ĕçе те пысăк хăвăртлăхпа тата паха туса пыраççĕ.

Колхозниксемпе колхозницăсен халĕ пурин те пĕр шухăш, пĕр ĕмĕт: ирсĕр тăшмансене — çынвĕлерен фашистла бандăсене хамăрăн çĕршывран хăвăртрах тасатмалла, тăшмана ĕмĕрлĕхех çапса аркатмалла.

Тăван çĕршывшăн кĕрешме, тыла çирĕплетме, Хĕрлĕ Çара пулăшма арçынсемпе пĕрлех, хĕрарăмсем те пĕр каррăн тăчĕç. Совет хĕрарăмĕсен патриотла туйăмĕ пит те пысăк. Вĕсем хăйсен упăшкисене, пиччĕш-шăллĕсене фронта кайнă чухне çирĕп наказсем параççĕ, боецсем патне фронтра паттăррăн çапăçма хавхалантарса çырусем çыраççĕ.

Ушанарти Калинин ячĕпе тăракан колхозра (Шăхасан р.) Павел Егоров çемьинчен фронта, нимĕç авантюристчĕсене хирĕç çапăçма, тăваттăн тухса кайнă. Тăваттăмĕш ывăлне—Афанасине ăсатнă чухне унăн амăшĕ ăна çапла каланă:

— Эсир, манăн юратнă ывăлăмăрсем, тăшмана çĕнтерессине эпĕ шанатăп. Çапăçăр, çĕнтерĕр вăл йытăсене! Эпир кунта, колхозра, тăрăшса ĕçлĕпĕр, сире валли тырпул, апат-çимĕç, тумтир парса тăрăпăр.

Куракассинчи колхозри (Элĕк р.) Ефросиния Макарова хăйĕн упăшкине—Иван Константинова хăюллăн çапăçма хушать:

— Эпĕ санăн паттăрлăхна кĕтетĕп. Эсĕ тăшмансене çĕнтерсе кил. Ун чухне пирĕн пурнăç татах лайăхланĕ, эпир пуянрах пурăнма тытăнăпăр, — тет вăл. Çавăн пек ĕнтĕ пирĕн хĕрүллĕ патриоткăсен шухăш-кăмăлĕ.

Хулара та, ялта та, фабрик-заводсенче те, колхозсенче те совет патриоткисен активлăхĕ кунран кун ӳссе пырать. «Хĕрарăм колхозра — пысăк вăй», тенĕ Сталин юлташ. Çак вăй халĕ колхозра хăйĕн пĕтĕм паттăрлăхĕпе ĕçлет. Колхоз производствинче хĕрарăмсем питех те пархатарлă вырăн йышăнса тăраççĕ. Колхозра вĕсем хутшăнман ĕç çук. Колхозницăсем фронта кайнă арçынсем вырăнне ĕçлеме тăраççĕ. «Коммунист» колхозра (Ишлей р.) счетовод В. Любимов юлташ Хĕрлĕ Çара тухса кайнă. Ун вырăнне звеньевая пулса ĕçленĕ К. Васильева юлташ йышăннă. Çак районри Буденный ячĕпе тăракан колхозри З. Малютинпа С. Фомин бригадирсем вырăнне те хĕрарăмсем йышăннă. Колхозра ĕç пĕр самантлăха та чарăнса тăмĕ. Колхозри производствăллă пурнăç вăйлă çăлкуçĕ пек палкаса тăрĕ. Колхозницăсем колхоз производствинче хăйсен иксĕлми вăй-халне, пултарулăхне кăтартаççĕ. Уйра-и, улăхра-и, фермăра-и, пахчара-и, утарта-и, садра-и — пур çĕрте те колхозницăн маттур ĕçĕ курăнать. Ĕнер звеньевой пулнă колхозница—халĕ бригадир, доярка, ферма пуçлăхĕ т. ыт. те. Çум çумлаççĕ-и, тислĕк турттараççĕ-и, утă çулаççĕ-и, çурт-йĕр тăваççĕ-и — ăçта кирлĕ унта хĕрарăмсем ĕçлеççĕ, пур ĕçе те вĕсем активлăн хутшăнаççĕ. Хăйсемшĕн çеç мар, фронта кайнисемшĕн те ĕçлеççĕ вĕсем, пĕр çын ик-виç çын вырăнне ĕçлеме тăрăшать.

Егоркинăри «Большевик» колхозра (Çĕмĕрле р.) утă çулнă çĕрте ирхине 3—4 сехетре тăрса сĕм тĕттĕмччен ĕçленĕ Н. Петрова, Т. Чумейкина, В. Кубанова колхозницăсем хăйсен кулленхи нормине 130—150 процент таран тултарса пынă. Молотов ячĕпе тăракан колхозра (Вăрнар р.) чугунçул транспортне пулăшнă çĕрте звеньевой А. Скворцова нормăна 160 процент тултарса ĕçленĕ. Ку колхозра выльăхчĕрлĕхсене пăхакан колхозницăсем те пит тухăçлăн ĕçлеççĕ. Тихонова пăхакан пăрусем пурте сывă. «Зорька» пăру кунне 960 грамшар хутшăнса пырать. Тихонова юлташ вăтамран пĕр ĕнерен кунне 6—7 литр сĕт суса илет. Çакăн пек тĕслĕхсене нумай колхозсенче тĕл пулма пулать.

Оборонăн Государственнăй Комитечĕн Председателĕ И. В. Сталин юлташ радио тăрăх тухса калани миллионлă колхозниксен массин кĕрешес тата ĕçлес хастарлăхне хăватлăн çĕклерĕ. Колхозницăсен шухăш-кăмăлĕсене палăртса, Çĕмĕрле районĕнчи Хутарти Ленин ячĕпе тăракан колхозри стахановка Е. Михайлова юлташ çапла калать:

— Арçынсем фронтра тăшмана хирĕç кĕрешеççĕ. Эпир, хĕрарăмсем, тылра стахановла ĕçлесе, фронта кайнă арçынсен вăйне хамăрăн вăйпа улăштарса, тыла çирĕплететпĕр. Эпĕ халĕ трактор çинче ĕçлеме хатĕрленетĕп Кирлĕ пулсан, эпĕ хам та винтовка тытса тăшмана хирĕç çапăçма хатĕр,— тет вăл.

Машинно-тракторнăй станцисене трактор, комбайн ĕçне вĕренме ыйтса çырнă заявленисем çĕршерĕн килеççĕ. МТ Станцийĕсенче трактористсем, комбайнерсем хатĕрлекен курссем ĕçлеççĕ, вăл курссенче хĕрарăмсем нумай вĕренеççĕ. Етĕрнери машинно-тракторнăй станцинче трактористсен курсĕнче 38 хĕрача вĕренет. Тăвай райçĕрĕç пайĕ районри колхозсем валли курсран 43 машиновед вĕрентсе кăларнă. Вĕсенчен хĕрарăмсем — 39. Вăрнар МТ Станцийĕнчи машиноведсем, комбайнерсем, трактористсем пулса ĕçлеме курсран 40 хĕрарăм вĕренсе тухнă. Хĕрарăмсем фронта кайнисем вырăнне ларса трактор рульне, комбайн штурвалне тытаççĕ. Красноармейски машинно-тракторнăй станцинче юлашки икĕ эрне хушшинче ĕçе çĕнĕрен 10 хĕрарăм хутшăннă. Е. Гаврилова, М. Владимирова, Д. Егорова трактористкăсем суха сухалас плана 200—300 проц. таран тултарса пыраççĕ. Иванова тата Егорова юлташсем, халиччен комбайнер помощникĕсем пулса ĕçленĕскерсем, халĕ комбайн штурвалне хăйсен аллине илнĕ.

Фронта каякансен вырăнне тăрса ĕç лесси — совет патриоткисен таса тивĕçĕ. Ялхуçалăх машинисем, тракторсем, комбайнсем ĕç вăйĕсĕр тăмĕç.

Колхозлă уйхирсенче вăйлă тырпул пиçет. Ял уборкăна хатĕрленет. Уборка — ялхуçалăхĕнчи мĕнпур ĕçсен ăнăçлăхне татса парать. Çавăнпа та çак ĕçе пур енчен те тĕплĕн хатĕрленсе çитни, ĕç вăйĕсене тĕрĕс йĕркелесе тухни кирлĕ. Кашни колхоз, бригада, кашни звено уборкăна мĕнле хатĕрленсе çитнине татах та татах тĕрĕслесе пăхас пулать. Кăçалхи уборка мĕнле условисенче пулса иртмеллине, кăçалхи уборкăн уйрăмлăхĕсене кашни колхозникпе колхозницăн пит те лайăх пĕлсе тăмалла. Вăрçă вăхăчĕ пур ĕçе те хăвăрт та ăнăçлăн тума ыйтать. Çавăн пекех пулмалла тырпула пухса кĕнĕ чухне те. Пуçи тырпула каррăн тухса пухса кĕрер, пĕр пĕрчĕ тырă та уя хăварар мар. Çак ĕçре хĕрарăмсен вырăнĕ калама çук пысăк.

Ăнса çитĕнекен тырпула ăнăçлăн пухса кĕрĕпĕр. Пирĕн Хĕрлĕ Çар хăйне кирлĕ çимĕçсене ытлăн-çитлĕнех илĕ. Камăн кăкринче патриот чĕрийĕ тапать, вăл паян çавăн çинчен шутлать. Кашни колхозницăн патриотла чыслă ĕçĕ вăл — колхозăн тырпулне кĕске срокра тата пысăк пахалăхпа пухса кĕме тăрăшасси пулать.

Колхозсенчи партипе комсомол организацийĕсен тивĕçĕ—хĕрарăмсен патриотла çĕкленĕвне ӳстерсе пырасси пулать, вăрçă вăхăтĕнче колхозсен умĕнче тăракан конкретлă задачăсене ăнăçлăн пурнăçлас ĕçре çав çĕкленӳпе анлăн усă курмалла. Пур ĕçе те йĕркеллĕ, организованно туса пымалла.

Колхозсенче хĕрарăмсене тухăçлăн ĕçлеме кирлĕ условисем туса парас пулать. Пĕрле апатланас ĕçе йĕркелемелле, ача яслисем, площадкисем уçмалла. Çак ĕçсем вĕсем вăрçă вăхăтĕнче питĕ те кирлĕ, паха ĕçсем пулса тăраççĕ.

Колхоз производствинче нумай ĕçсенче çамрăксем—вĕренекен ачасем пысăк пулăшу пама пултараççĕ. Ку тĕлĕшпе чылай колхозсенче вĕренекен ачасем практикăллă ĕçе тытăннă ĕнтĕ. Вĕсем колхозниксене çум çумланă, утă çулнă çĕрте пулăшаççĕ. Колхозра ĕçлени—Хĕрлĕ Çара пулăшни пулать, çакна ачасем пит лайăх пĕлеççĕ. Вăрçă вăхăтĕнче Хĕрлĕ Çара пулăшнинчен пархатарлăрах ĕç урăх çук.

Совет çыннисем — арçынсем те, хĕрарăмсем те — халĕ пĕр ĕмĕтпе ĕçлеççĕ. Пурте фронт валли, пурте çĕнтерӳ тума! Çакă вăл иксĕр миллионлă совет халăхĕн хăватлă лозунгĕ. Эпир мĕншĕн кĕрешнине пĕлетпĕр. Эпир тăшмана çĕмĕрсе тăкассине шанса тăратпăр. Пирĕн çĕршывра кашниех — арçынсем те, хĕрарăмсем те — тăшмана тĕп тăвассишĕн тăрăшаççĕ. Çавăн пек çынсем пурăнакан çĕршыва никам та, нихăçан та çĕнтерес çук.

Совет артиллерисчĕн ятне вараламастпăр

Фашизма пуçĕпех пĕтермелли вăхăт çитрĕ. Пирĕн Хĕрлĕ Çар фашистсен бандичĕсене хирĕç хăюллăн та паттăррăн кĕрешет. Пирĕн çапăçу вăл—тĕрĕс ĕçшĕн пыракан çапăçу.

Пиччесем, аппасем, йăмăксем, аттесемпе аннесем фронта кайнă юлташсем вырăнне фабрик-заводсенче, предприятисенче, колхозсенче тăрăшса ĕçлĕр!

Эпĕ фронта тухса кайнă май хамăн тăван Чăваш республикинчи ĕççыннисене çапла каласшăн: фронтри çапăçусен пысăк ответлăхне эпĕ пĕтĕм чĕререн ăнланса илетĕп. Тăшмана хирĕç пĕтĕм вăя хурса, кирлĕ пулсан, пурнăçа парса çапăçма тата совет артиллерисчĕн ятне чыслăн тытса пыма пулатăп.

Старший лейтенант
А. ЗАХАРОВ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

(Июлĕн 17-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ)

Июлĕн 17-мĕшĕнче пирĕн войскăсем Псков-Порхов, Полоцк, Смоленск, Новоград-Волынск енĕсенче тата фронтăн Бессарабири участокĕнче çапăçнă. Çапăçусем хыççăн фронтра войскăсен положенийĕнче пысăк улшăнусемех пулман.

Июлĕн 17-мĕшĕнче пирĕн авиаци противникăн мотомехвойскисене атакăланă, унăн аэродромсенчи авиацине пĕтере-пĕтере тăкнă. Июлĕн 15-мĕшĕн 16-мĕшĕнче нимĕçсен 98 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 23 самолет пĕтнĕ.

* * *

Лейтенант Капацынăн резервра тăнă батарейинчи боецсем çапăçу хирне сăнанă. Командир сасартăках çакна асăрханă: нимĕçсен 7 танкĕпе икĕ бронемашини кĕпер урлă каçнă та пирĕн пехота çине пеме пуçланă. Лейтенант çийĕнчех пĕр орудипе танксен флангне пырса кĕме, вĕсене тӳрех персе çĕмĕрме йышăннă. Оруди расчечĕ тупăна танксем патĕнчен иçсĕх мар тăракан хӳме патне илсе пынă. Пĕррремĕш хут персенех, малти танка вут хыпса илнĕ. Икĕ снаряд иккĕмĕш танкăн моторĕпе гусеницине çĕмĕрсе тăкнă. Нимĕçсем хăйсем çине хӳме хыçĕнче курăнакан чул çуртран переççĕ тесе шутланă, çав çурт çине пеме пуçланă. 15 минута хушшинче лейтенант Капацын фашистсен 7 танкĕпе икĕ бронемашинине пĕтерсе тăкнă.

* * *

Д. юханшывĕн çыранне хӳтлекен икĕ подразделени хушшинче çĕрлехи вăхăтра телефонлă çыхăну татăлнă. Çакна юсама красноармеец-связистсем Трофимовпа Гатауллин юлташсем тухса кайнă. Фашистсен снайпер-автоматчикĕсем хăюллă связистсем çине виçĕ хутчен персе тăнă, çапах та 40 минутăран связистсем çыхăнăва юсанă. Каялла таврăннă чухне çул çинче тăшман снайперĕ Гатауллин юлташа йывăр амантнă. Красноармеец Трофимов аманнă юлташа йывăç тĕмисем хушшине йăтса кĕрсе суранне çыхнă та, юлташне çурăм çине хурса, хăйĕн подразделенийĕ патнелле шуса кайнă. Хăюллă связист тăшман снайперĕсем персе тăракан вырăнтан хăйсен чаçĕ патне çитиччченех виçĕ сехет хушши шуса пынă, заданине пурнăçа кĕртни çинчен командира пĕлтернĕ тата аманнă юлташа санитарсене панă.

* * *

Югославири Чаковец хулинче фашистсен оккупациллĕ войскисен командованийĕ 22 словена çакса вĕлермелле тунă, мĕншĕн тесен вĕсем юлашки ĕнесене çар влаçĕсене парасшăн пулман.

* * *

Нимĕç салтакĕсен чакса пыракан хастарлăхне хăпартас шутпа, нимĕç командирĕсем туртса илнĕ хуласене ик-виçĕ кун хушши çаратса çӳреме салтаксене официальнăй йĕркепех ирĕк панă. Латвири Варакляни хулинче ĕçсе ӳсĕрĕлнĕ фашистсем халăхăн мĕн пур хаклă япалисене çаратса пĕтернĕ. Çарату пуçланнă хыççăн виççĕмĕш кунне гитлеровецсен çĕнĕ кĕтĕвĕсем пырса çитнĕ, анчах та унта çаратмалли урăх нимĕн те пулман, çавăнпа та çаратса пухнă япаласене пайланă вăхăтра фашистсен вăрă-хурахла салтакĕсем хушшинче çапăçу пуçланнă, вĕсем пĕр-пĕрне хĕнеме тытăннă.

* * *

Плоешти районĕнче вырнаçса тăракан румынсемпе нимĕçсен войскисем питех те нумай рабочисене тата вĕсен çемьисене арестлеççĕ, мĕншĕн тесен çав рабочисемпе вĕсен çемьисем совет самолечĕсем бомбăсем пăрахнипе тухнă пушарсене сӳнтернĕ çĕрте пулма килĕшмеççĕ.

* * *

Рыбачий ятлă çурмаутравран çурçĕрхĕвелачăç енче тăракан Варангер-Фиордра Германин подводнăй лодки ишсе çӳрекен мина çине пырса тăрăнса шыва путнă.

* * *

Францири нимĕçсем оккупациленĕ Руан ятлă хулара ухтарусемпе арестсем пит нумай туса иртнерне. Ухтарусемпе арестсене çакăншăн тунă: Германипе хирĕç пыракан вăрçăра пĕрле кĕрешесси çинчен СССР Правительствипе Великобритани Правительстви хушшинче тунă килĕшӳ текстне пичетленĕ нумай листовкăсене хулара сарнă пулнă. Виçĕ арçына тата пĕр хĕрарăма листовкăсем çыпăçтарнă чухне тытнă та вĕсене персе вĕлернĕ.

Шкул ачисем гитлерла бандăсене хирĕç кĕрешекен боецсен çемьисемшĕн тăрăшаççĕ. Новосибирскри 24-мĕш номерлĕ шкулти вĕренекенсем — Шматов, Гордеев, Капустин тата ытти красноармеецсен çамьисенче час-часах пулакан хăнасем. Вĕсем амăшĕсем ĕçе кайсан ачасене пăхаççĕ, хваттерсенчи йĕркелĕхпе тасалăха сăнаса тăраççĕ, пахчасенче ĕçлеççĕ. Учительница З. Н. Моригеровская ертсе пынипе, Тула хулинчи 18-мĕш номерлĕ шкулта вĕренекенсем мобилизациленĕ красноармеецсен арăмĕсене, пурĕ 60 çынна, пулăшаççĕ. Пионерсем вĕсен çемьисене хуçалăхра пулăшаççĕ, ачасене пăхаççĕ, фронта çырусем çыраççĕ. Нумаях пулмасть килхуçи хĕрарăмĕсем çакăн пек запискăсем илнĕ: «Сирĕн ачасем пулсан, вĕсене Лев Толстой урамĕнчи 47-мĕш номерлĕ çурта илсе пырăр, вĕсене унта шкул ачисем пăхаççĕ». Унта З. Н. Моригеровская шкул ачисемпе пĕрле ачасен садне организациленĕ, мобилизациленисен арăмĕсем ĕçе кайнă чухне хăйсен ачисене çавăнта илсе пыма пултараççĕ. Саратоври шкул ачисен двоцĕнче красноармеецсен çемьисене пулăшас тĕлĕшпе ĕçлекен дружинăсем 14 тунă. Фашистла вăрă-хурахсене хирĕç пыракан вăрçа мобилизациленĕ боецсен çемьисенче дружинниксен ĕçĕсем çинчен ырласа калаççĕ.

Совет Союзĕн Маршалĕ, Кăнтăр-Хĕвеланăç енчи войскăсен Главнокомандующийĕ **С. М. Буденный** юлташ. (ТАСС фотохроники).

Йăлтах фронт валли

ВĂРНАР. Ирарти рудникре ĕçлекен рабочисен пурин те пĕр шухăш — фашистла вăрă-хурахсене хăвăртрах çапса аркатма фронт валли кирлĕ таранах руда парасси. С. Медведев юлташ ертсе пыракан бригада июль уйăхĕнчи плана 10 кун хушшинче 131 процент тултарчĕ. Забойщик пулса ĕçлекен Г. Русковпа С. Кузнецов юлташсем те уйăхри плана 10 кун хушшинчех 130 процент тултарчĕç.

С. Комаров юлташăн бригади производствăллă плана кашни уйăхрах иртттерсе тултарать. Унăн бригади июнь уйăхĕнчи плана 137 процент, июль уйăхĕнчи плана малтанхи 10 кун хушшинчех тултарнă.

Иван Игнатьев рудникре 8-мĕш çул ĕçлет, унăн бригади кулленхи ĕç планне яланах иртттерсе тултарать. Июль уйăхĕнчи плана Игнатьев юлташ бригади те малтанхи 10 кун хушшинчех тултарнă.

Рудникре ĕçлекен рабочисем ĕç тухăçлăхне ӳстерсех пыраççĕ. Бригадăсенче социализмлă ăмăртупа стахановла движени анлăн сарăлнă.

— Эпир планран ытлашши кăларнă кашни тонна руда юнлă фашизмăн куççулне кĕскетсе пырĕ, — теççĕ рабочисем.

Н. АНИСИМОВ.

КУКЕÇ. «14 лет Октября» колхозри колхозниксем уборкăна хатĕрленсе çитнĕ. 1941 çулшăн государствăна 65 центнер тĕштырă панă, аш-какай, çăмарта, çăм, сĕт обязательствисене те пĕтĕмпех тултарнă.

70 çулхи Агрипина Родионова çапла калать:

— Манăн ывăл Хĕрлĕ Çара кайрĕ. Эпĕ ăна тăшмана хирĕç вирлĕн кĕрешме хушса ятăм. Хам эпĕ кунта, колхоз производствинче, тӳрĕ кăмăлпа ĕçлесе, Хĕрлĕ Çара пулăшатăп.

М. СМЕТАНИН.

Совет Информаци Бюровĕнчен

(Июлĕн 18-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ)

Ыран июлĕн 18-мĕш тенĕ чух çĕрле Псков-Порхов, Смоленск, Бобруйск енĕсенче тата фронтăн Бессарабири участокĕнче вăйлă çапăçусем пулса пынă. Фронтри войскăсен положенинче пысăк улшăнусемех пулман.

Июлĕн 17-мĕшĕнче пирĕн авиаци противникăн мотомехчаçĕсем çине тата унăн аэродромĕсенчи авиацийĕ çине атакăсем тунă. Туллимар даннăйсем тăрăх, июлĕн 17-мĕшĕнче сывлăшри çапăçусенче тата çĕр çинче противникăн 22 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 8 самолет пĕтнĕ.

* * *

Н-ски стрелковăй дивизин чаçĕсем фашистла захватчиксене хирĕç ăнăçлăн çапăçаççĕ. Дивизи красноармеецĕсем пĕр çапăçура 1000 яхăн нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене пĕтерсе тăкнă. Уйрăмăнах политрук Бутарев палăрнă. Çапăçура вĕлернĕ командир вырăнне тăрса, Бутарев юлташ ротăна контратакăна илсе кайнă. Совет ротин командирне вĕлернĕшĕн фашистсене питех те хытă лекнĕ: çапăçу хирĕнче нимĕçсен 84 салтакĕ тата 3 офицерĕ выртса юлнă. Рота 6 пулемет, нумай винтовкăсем, гранатăсем, патронсем тата ытти пурлăхсем туртса илнĕ.

* * *

Н-ски противотанковăй артиллери группине Б. юханшывĕ урлă каçмалли переправăна сыхлама хушнă пулнă. Артиллеристсем хăйсен задачине питех те чаплăн пурнăçланă. Вĕсем переправăсене пирĕн чаçсем пырса çитиччченех сыхласа тăнă. Артиллеристсем нимĕçсен 14 танкне, 2 çăмăл автомобиль, 16 йывăр автомашинăсене тата вĕсемпе пĕрле пулнă пехотăна çĕмĕрсе тăкнă.

* * *

Сапернăй ротăри политрук заместителĕ Огромный юлташ П. юханшывĕ урлă каçмалли кĕпере сирпĕтсе ярас ĕçе хăй çине илнĕ. Огромный юлташ ертсе пынипе боецсен группи, взрыв тумалли япаласем тултарнă 8 килограма яхăн туртакан йывăр ещĕксене илсе, уçă дамба тăрăх шуса кайнă та кĕпер айне, противникран 100 метрта, снарядсем хунă. Кирлĕ вăхăтра кĕпере взрыв туса çĕмĕрсе тăкнă.

* * *

Финсен 9 салтакĕ Хĕрлĕ Çар енне куçса каçнă. Вĕсем белофинсен çарĕнчен салтаксем массăллăн тарни çинчен каласа панă. «Салтаксем нумайĕшĕ, — тенĕ капрал Альвар Халонен,— вăрмансене тарнă чух хăйсемпе пĕрле винтовкăсемпе патронсем илсе каяççĕ. Çартан тарнисене хирĕç кĕрешес майпа, çар влаçĕсем казармăсем патĕнчи постсемпе патрульсене вăйлатрĕç. Анчах çакă та пулăшмасть. Час-часах пострa тăракансем хăйсем те тараççĕ. Çак кунсенче Хаукивеси кӳллин районĕнче шюцкоровецсем вăрмансемпе шурлăхсенче пытаннă дезертирсем çине облава тунă. Вĕсен аллине лекнисене вилĕм хăратса тăнă. Эпир Гитлершăн тата унăн йыткĕтĕвĕсен шайккишĕн вăрçма шутламастпăр, çавăнпа та эпир белофинсен çарĕнчен тухса тартăмăр. Эпир хамăр хĕçпăшала хамăрпа пĕрлех илсе килтĕмĕр, нимĕç фашисчĕсене пĕтерсе такăссишĕн Хĕрлĕ Çарпа пĕрле кĕрешме шутлатпăр».

* * *

Партизансен утлă отрячĕ нимĕçсем С. юханшывĕ урлă хывнă кĕпере взрыв туса çĕмĕрсе тăкнă. Партизансен пĕр группи çыранри вĕтлĕхре пытанса ларса, нимĕçсен транспорчĕсене кĕтнĕ. Партизансен тепĕр группи çывăхри вăрманта пытаннă. Çĕрле юханшыв патне нимĕçсен автоколонни пырса çитнĕ. Çыран патĕнче, кĕпер ванчăкĕсем умĕнче, вĕсен чарăнса тăмалла пулнă.

Машинăсен водителĕсем, ирĕксĕрех чарăнса тăмалла пулнин сăлтавне пĕлес тесе, кабинăсенчен сике-сике тухнă. Кунтах конвойсем те килсе пухăннă. Çак вăхăтра засадăри партизансем пулеметсенчен пеме пуçланă. Боеприпассем тиенĕ чылай автомашинăсем сирпĕнсе кайнă. Фашистсем хушшинче паника пуçланнă. Таракан фашистсене вăрмантан килсе çитнĕ партизан-конниксем хуса çитсе пере-пере вĕлернĕ. Нимĕçсен 24 салтакран тата 1 офицертан тăракан конвойне пĕтĕмпех пĕтерсе тăкнă. Партизансем, вăрçă хатĕрĕсем ярса илсе, вăрманалла кĕрсе кайнă.

* * *

Фашистсен тылĕнче паттăррăн кĕрешекен совет партизанĕсем пĕлтернĕ тăрăх, хăйсем туртса илнĕ районсенче гитлеровецсем ытларах та ытларах ирсĕр ĕçсем туса пыраççĕ. Июлĕн 13-мĕшĕнче фашистсен танкисчĕсем партизансен отрячĕн 3 разведчикне ярса тытнă пулнă. Çамрăк партизансем хăйсен ятне калама тата отряд ăçта вырнаçса тănине пĕлтерме килĕшмен. Темĕнле хĕнесе те фашистсен офицерĕ герой-партизансенчен сведенисем илме пултарайман. Александр Симохин партизана гитлеровецсем танк гусеници айне хунă, вăл отряд ăçта пытанса тăнине пĕлтермесен, ăна таптаса вĕлерессипе хăратнă. Йывăр вилĕм герой паттăрлăхне хуçма пултарайман. Кун хыççăн, урса кайнă фашистсем партизана уяраран çыхса танкран кăкарнă та машинăна пысăк хăвăртлăхпа вĕтлĕх тăрăх илсе пынă. Геройсен çĕмĕрсе пĕтернĕ ӳчĕсене партизансем çĕрле пырса пуçтарса кайнă.

* * *

Чугунçул çинчи обходчик Чернышев юлташ хăйĕн участокне пăхса çӳренĕ. Вăл 4 çынна асăрханă. Палламан çынсем çар объекчĕ патнелле утнă. Чернышев тревога çĕкленĕ. Диверсантсемпе постра тăракан икĕ красноармеец пăшалсенчен пеме пуçланă. Пĕр фашисчĕ красноармеец патне хыçран шăвăнса пынă та ун çине ыткăннă. Обходчик Чернышев, гайкăсем кăлармалли уççипе çапса, тăшмана вĕлернĕ. Ытти диверсантсене арестленĕ.

Миллионшар совет патриочĕсем хамăрăн çĕре гитлерла бандитсенчен сыхласа тăраççĕ. Запорожье облаçĕнчи пиншер рабочисем, колхозниксем тата служащисем истребительнăй батальонсене кĕнĕ. Тамбов облаçĕнчи Шехмански районри 60 колхозра государствăллă тата обществăллă харпăрлăха сыхлакан дружинăсем организациленĕ. Çав облаçри Кирсановски районри колхозниксем кĕперсене, предприятисене тата чугунçул станцисене сыхлакан дружинăсем тунă.

Ҫара пулăшма—халăхăн хăватлă ополченийĕ

Рабочисем халăх ополченийĕн ретне тăраççĕ

ÇЕМĔРЛЕ, июлĕн 18-мĕш. («Чăваш Коммуни» корр.). Ĕнер пĕрремĕш смена ĕç пĕтернĕ хыççăн «Большевик» заводри рабочисем, инженерно-технически работниксем тата служащисем митинга пухăнчĕç. Партбюро секретарĕ Беляков юлташ митинга уçса çапла каларĕ:

— Фашистла вăрă-хурах тăван çĕршыв çине тапăнчĕ. Çав усал тăшмана хирĕç, мухтавлă Хĕрлĕ Çарпа пĕрле, пĕтĕм совет халăхĕ çĕкленсе тăчĕ. Сталин юлташ чĕнсе каланине ответлесе, халĕ пур çĕрте те совет çĕршывĕнчи ĕççыннисем халăх ополченийĕн ретне тăраççĕ. Эпĕ те халăх ополченийĕн ретне тăма ыйтса заявлени патăм. Сире те халăхăн нумай пинлĕ ополченийĕн ретне тăма чĕнетĕп.

Ун хыççăн комсомол комитечĕн секретарĕ Егоров юлташ сăмах илчĕ.

— Тăван çĕршыв умне хăрушлăх килсе тухрĕ, — тет вăл. — Урса кайнă фашизм, унăн чылай вăйлă çар чаçĕсене мухтавлă Хĕрлĕ Çар çапса аркатрĕ пулин те, сĕмсĕрленсех çапăçать. Гитлерла çĕлен-калтасем пирĕн телейлĕ пурнăçа туртса илесшĕн. Çук, вăл нихăçан та пулмĕ, Совет халăхĕ ирсĕр тăшмана çĕмĕрсе тăкĕ. Эпĕ те халăх ополченийĕн ретне тăратăп.

Шустин, Скибицкий т. ыт. юлташсем те хăйсен сăмахĕсенче халăх ополченийĕн ретне тăни çинчен пĕлтерчĕç.

Митингра пурте пĕрсаслă пулса йышăннă резолюцире заводри рабочисем хулари ĕççыннисене пурне те халăх ополченийĕн ретне тăма чĕнеççĕ.

Заводри парткома заявленисем вĕçĕмсĕр пырса тăраççĕ. Çамрăккисем те, ваттисем те—пурте хăйсене халăх ополченийĕн ретне илме ыйтаççĕ. Заявленисем панисен йышĕнче: граждан вăрçин участникĕ Соловьев, шофер Макарова (унăн упăшки фронтра), стахановец Закалябин тата ытти юлташсем те пур.

ÇĔРПУ, июлĕн 18-мĕш. («Чăваш Коммуни» корр.). Халăх ополченийĕ тăвас ятпа ĕнер районри финанс пайĕнче тата госбанкра ĕçлекенсен митингĕ пулса иртрĕ.

Пуçламĕш парторганизаци секретарĕ Яснопольский юлташ митинга уçса Хĕрлĕ Çара пулăшма халăх ополченийĕ тăвасси вăйлăн сарăлса пыни çинчен каларĕ, пурне те халăх ополченийĕн ретне тăма чĕнчĕ.

— Манăн, — тет Левин юлташ,—пĕрывăл белофинсене хирĕç çапăçса вилчĕ, тепри халь Хĕрлĕ Çар ретĕнче. Эпĕ ватă. Çапах та, эпĕ алла пăшал тытса тăшмана хирĕç çапăçма хатĕр. Мана халăх ополченийĕн ретне илме ыйтатăп.

Çынсем тухса каланă вăхăтрах президиума заявленисем пыма тытăнчĕç, 30 минута хушшинче 27 çын заявлени пачĕ.

Халăх ополченийĕн ретне тăракансен йышĕ хулара та, ялсенче те ÿссех пырать.

Г. ПЕТРОВ.

Пĕтĕм вăя—фашизма пĕтерме

Халăх ополченийĕ тăвас ыйтупа июлĕн 14-мĕшĕнче Шупашкарти хлебокомбинатра митинг пулса иртрĕ. Митинга парторганизаци секретарĕ Дьяконов юлташ уçрĕ. Вăл Германи фашизмне тĕппипех çĕмĕрсе тăкас çĕрте Хĕрлĕ Çара пулăшма пысăк хуласенче пур çĕрте те халăх ополченийĕ туни çинчен каласа пачĕ.

Директор Никулин юлташ хăйĕн сăмахĕнче пурне те халăх ополченийĕн ретне тăма чĕнчĕ.

Митингра тухса каланисем: экономист Абрамов, пекарь Васильев тата ыттисем те халăх ополченийĕн ретне илме ыйтса çырнă заявленисене сĕтел çине пыра-пыра хураççĕ. Вĕсем пурте фашистсен урнă йыттисене хирĕç хăйсен пурнăçне шеллемесĕр çапăçма хатĕрри çинчен пĕлтереççĕ.

— Манăн атте тăван çĕршывшăн, Гитлер бандичĕсене хирĕç çапăçать. Эпĕ те унпа пĕрлех тăрса тăшмана хирĕç çапăçма хатĕр, мана та халăх ополченийĕн ретне илме ыйтатăп, — тет вунсакăр çулхи П. Хозилов юлташ.

«Эпир, рабочисем, служащисем тата инженерно-технически работниксем, пурте пĕр çын пек пулса, халăх ополченийĕн ретне тăратпăр. Тăшманăн кунĕсем кĕскелсех пыраççĕ. Нумаях та вăхăт иртмĕ, пĕтĕм кĕлеткипе çĕкленсе тăнă Совет халăхĕн вăйне тăшман татах аванрах курĕ, фашизм хăйĕн ирсĕр пуçне ĕмĕрлĕхех сухатĕ»,— тенĕ рабочисем митингра йышăннă резолюцире.

Икĕ аслă халăх гитлеризма хирĕç кĕрешет

ВĂРНАР. ССР Союзĕпе Великобритани правительствисем Гитлерла Германие хирĕç пыракан вăрçăра пĕрле кĕрешме пулнине ĕççыннисем питĕ ырлаççĕ. Машинно-тракторнăй станцинчи рабочисен, трактористсен тата служащисен пухăвĕнче А. Леонтьев юлташ çапла каларĕ:

— Европăри çак икĕ аслă державăсенчи халăхсем тунă союз фашистла Германие çĕмĕрсе тăкассине васкатать.

Иртеменкассинчи «Победа» колхоз членĕсем те Совет правительствин мероприятийĕсене ырлаççĕ.

— Гитлер тата унăн тарçисем Совет Союзне хирĕç мĕнпур Европа вăрçать тесе сÿпĕлтетни суя. Гитлеризма хирĕç Европăри халăхсем вăрçаççĕ, çак çапăçура Совет Союзĕнчи халăхсем малти ретре пыраççĕ, — тенĕ фосфорит заводĕнчи рабочисен пухăвĕнче йышăннă резолюцире.

В. ЦЫПЛЕНКОВ.

Вăйлă тырпула пĕр тăкаксăр пухса кĕртессишĕн кĕрешетпĕр

ÇĔРПУ. Иртнĕ çулта пирĕн районри колхозсем вăтам шутпа пĕр гектар çинчен 11,13 центнер тĕштырă пухса илчĕç. Кăçал план тăрăх 12,5 центнер туса илмелле.

Ĕçшĕн хупса тÿлесси çинчен партипе правительство историллĕ постановленине каларнă хыççăн, малта пыракан колхозсем—«Радио», «Красный герой», Клим Ворошилов, Леваневский ячĕпе тăракан т. ыт колхозсем тырпул тухăçлăхне вăтам шутпа 15—16 центнер таран ÿстерме пулчĕç. Ку колхозсем çуракине кĕске вăхăтра пысăк пахалăхпа ирттерчĕç.

Пысăк пахалăхпа тата кĕске вăхăтра акса хăварнă çуртырри аван шăтса тухрĕ.

Колхозниксемпе колхозницăсем çуртыррисене çум куракĕсенчен тасатассишĕн тăрăшса ĕçлерĕç. Ку тарана çитиччен пĕтĕмпе 8.245 гектар çинче çуртыррине, 910 гектар çинче вăрлăхлăх акнă клевера, 410 гектар лаптăк çинчи çĕрулми вырăнне çумкуракĕсенчен тасатрĕç.

Колхозниксемпе колхозницăсем вăйлă тырпул туса илессишĕн пĕтĕм вăйхала хурса кĕрешни сая каймасть. Вĕсем халĕ пархатарлă ĕçĕн çимĕçне хирте курма пултараççĕ. Çуллахи ăшă çилпе хумханса ларакан симĕс ыраш, хăмăш пек кашласа ÿсекен çуртырри, вăйлă пахча-çимĕçсем колхозниксемпе колхозницăсем вăйлă тырпулшăн çине тăрса ĕçленине кăтартса параççĕ.

Хальхи вăхăтра колхозсем умĕнче тăракан ответлă задачăсенчен пĕри — лайăх ÿсекен тырпулсене вут-кăвартан, выльăх-чĕрлĕхсем ватасран сыхласси тата вăйлă тырпула кĕске вăхăтра пĕр тăкаксăр пухса кĕртесси пулать.

Тырпула пысăк пахалăхпа пухса кĕртес ĕç иртнĕ çулсенче те колхозсен хисеплĕ ĕçĕ пулнă. Кăçал, фашистла Германин сĕмсĕр сыснисем хăйсен варалантăк сăмсисене пирĕн ешĕрсе ларакан тăван çĕршыв çине килсе чикнĕ вăхăтра, тырпула пĕр тăкаксăр пухса кĕртес ĕç колхозсем умне татах та вăйлăн тухса тăрать.

Оборонăн Государственный Комитечĕн Председателĕ Сталин юлташ радио тăрăх тухса каланă хыççăн районри колхозниксемпе колхозницăсем, мирлĕ строительство вăхăтĕнчи шухăш-кăмăлсене пăрахса, ĕçе вăрçă вăхăтĕнчи пек урăхлатса çĕнетме пуçларĕç. Пуринчен ытла тырпул пухса кĕрес ĕçе тимлĕн хатĕрленме тытăнчĕç.

Ыраш вырнă вăхăтрах ыраш акма вăхăт çитет, çуртырри те çав хушăрах пиçсе çитме пултарать. Унсăр пуçне колхозниксем фронта кайнă пирки, колхозсенче ĕç вăйĕсем сахалланма пултараççĕ.

Çаксене шута илсе, ĕç вăйĕсене тĕрĕс йĕркелеме тата машинăсемпе ытларах усă курма тăрăшатпăр. Паянхи куна 125 жнейка, 87 молотилка юсаса хатĕрлерĕмĕр тата 39 колхозра утă çулмалли машинăсене тырă вырмалла туса йĕркеленĕ. Пĕтĕмпе 146 итем хатĕрленĕ, вĕсенчен 3 итемне кăçал тунă. Итемсене касса тасатнă. Чĕрĕ тырăсене типĕтме 30 зерносушилка хатĕрленĕ, зернохранилищесем çителĕклĕ, кашнинех дезинфекци тунă. Çавасемпе çурласем те хатĕр, пурте юсавлă.

Машинно-тракторнăй станци паянхи куна 4 комбайн, 6 молотилка, 20 жнейка хатĕрлерĕ. Ытти машинăсене çитес кунсенчех юсаса пĕтерет. Кадрсем çителĕклĕ. Çак кунсенче çĕнĕрен 27 тракторист вĕрентсе кăларать, вĕсем хушшинче 24 хĕрача.

Лаша вăйĕ кашни колхозрах çителĕклĕ. Урапасем юсавлă. Кăçал 114 урапа çĕнĕрен тунă. Уборка валли 173 урапа çитмест. Вĕсене çитес кунсенче туса çитеретпĕр. Ут тавраш̆ĕсем пур, чылай колхозсенче ытлашшипех хатĕрленĕ.

Районри колхозсем утă çулма тухрĕç. Паянхи куна чылай колхозсем улăх утипе клевер утине çулса пĕтерчĕç. «Красный герой», «Молодая сила», «Луч» т. ыт. колхозсем государствăна утă парса татрĕç те ĕнтĕ.

Уборкăна хатĕрленнипе пĕрлех, кĕракине те хатĕрленетпĕр. Паянхи куна çĕртме сухи сухалас плана пĕтĕмпех тултарнă.

Ф. ПЕТРОВ.

Райсовет исполкомĕн председателĕ.

Фашизма вилĕм кĕтет.
Сизов ÿкерчĕкĕ.

Ялхуçалăх продукчĕсен хатĕрлевне йĕркеллĕ ирттерер

Оборонăн Государственный Комитечĕн Председателĕ И. В. Сталин юлташ 1941 çулти июлĕн 3-мĕшĕнче радио тăрăх тухса каланине пирĕн республикăри колхозниксем, пĕтĕм ĕççыннисем тырпула пухса кĕме организованно хатĕрленнипе тата государство умĕнчи хăйсен обязательствисене срокчен малтан тултарнипе ответлеççĕ. Колхозсем иртнĕ çулта пухса илнĕ тырпултан 1941 çул шучĕпе государствăна тырă тăратма тытăнчĕç. Обязательнăй йĕркепе государствăна тырă тăратас плана Вăрнар районĕпе Калинински район ăнăçлăн тултарса пыраççĕ. Вăрнар районĕнчи Кольцовкăри Сталин ячĕпе тăракан Ленин орденлĕ колхоз (председателĕ С. К. Коротков юлташ) государствăна обязательнăй йĕркепе тырă тăратмалли плана 100 процентчĕпех тултарнă, 1941 çулхи натуроплатăна та парса татнă. Кăмашри Сталин ячĕпе тăракан колхоз та (председателĕ Семенов юлташ) кăçалхи çулшăн государствăна тырă халех парса татнă. Молотов тата Ворошилов ячĕпе тăракан колхозсем те тырă тăратмалли обязательствăсене пĕтĕмĕшпех тултарнă. Калинински районĕнчи Мичурин ячĕпе тăракан тата «Клевер» колхозсем те государствăна тырă парас тĕлĕшпе чылай пысăк ĕçсем туса ирттерчĕç.

Выльăх-чĕрлĕх продукципе парас ĕç те çавăн пекех пысăк çĕкленÿпе пулса пырать. Юлашки кунсенче аш-какай тăратас йĕркепе заготпунктсене выльăх-чĕрлĕх парасси чылаях лайăхланчĕ. Иккĕмĕш квартал планне Хĕрлĕ Чутай, Элĕк, Йĕпреç районĕсем ытлашшипех тултарнă. Республикăра нумай колхозсем июлĕн малтанхи вунăкунлăхĕнче государствăна аш-какай памалли заданине июлĕн 5—7-мĕшесенче пурнăçа кĕртрĕç. Вăрнар районĕнчи Чапаев ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ Кондукторов юлташ) аш-какай тăратмалли çулталăк планне пĕтĕмпех тултарнă.

Иккĕмĕш кварталта сĕт памалли плана Тăвай, Элĕк, Етĕрне, Сĕнтĕр районĕсем ытлашшипех тултарнă. Калинински районри Мичурин ячĕпе тăракан тата «Клевер» колхозсем кăçалхи çулшăн сĕт ытлашшипех парса татнă.

Çăм, çăмарта парасси те çавăн пекех ăнăçлăн пырать. Çăмарта памалли плана иккĕмĕш кварталта Етĕрне, Сĕнтĕр, Советски, Элĕк районĕсем ытлашшипех тултарнă. Çăм тăратас плана Тăвай, Вăрмар, Чкаловски, Сĕнтĕр тата Канаш районĕсем пĕтĕмпех тултарнă.

Иртнĕ çулта туса илнĕ йĕтĕн продукцинчен 1941 çулшăн тÿлесси те аван пырать. Елчĕк районĕнчи колхозсем 1941 çулшăн йĕтĕн продукцине чылай нумай панă. «Осоавиахим» колхоз (Елчĕк р.) йĕтĕн продукцине кăçалхи çулшăн памалли плана 110 процент тултарнă. Йĕтĕн продукцине панипе вăл колхоз 2500 т. преминадбавка илнĕ. 1941 çулта йĕтĕн памалли плана Вăрмар районĕнчи «Арабось» колхоз—103 процент, Тăвай районĕнчи «Красная Чувашия» колхоз — 101 процент пурнăçланă. Çак çĕкленÿ вăл пирĕн ĕççыннисем Совет Союзĕн оборона хăватне çирĕплетес ĕçе активлăн хутшăннине пит те уççăн кăтартса парать. Срокчен парса татнă кашни центнер продукци Германи фашизмне хирĕç вирлĕн пырса çапать.

Çакăнтан хатĕрлев организацийĕсем умне акă мĕнле задача тухса тăрать: кăçал пур хатĕрлевсене те нихăçанхинчен те лайăхрах, организованно ирттерессишĕн, хатĕрлев планĕсене вăхăтчен малтан тултарассишĕн кĕрешмелле.

Колхозлă уйхирсенче вăйлă тырпул çитĕнет. Ăна пухса кĕме тата ялхуçалăх продуктисене государствăна срокчен малтан парса татма вăхăтра хатĕрленсе çитес пулать. Ку ĕнтĕ пит те ответлă ĕç. Ялхуçалăх продуктисен хатĕрлев планĕсене ăнăçлăн тултарасси — вăл çимĕçсене заготпунктсене пама пынă сдатчиксенчен пĕр чăрмавсăр, йĕркеллĕ илсе тăнинчен килет. Райуполнаркомзагсен аппарачĕсен ĕçĕсене халĕ вăрçă вăхăтĕ ыйтнă пек çĕнĕлле йĕркелемелле. Кашни работникĕн конкретлă, оперативлă ĕçлемелле, ĕççынĕсем хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе вăйлатса пымалла. Хатĕрлев организацисен — Заготзерно, Заготсено, Торгплодоовощтрест т. ыт. организацисен те çитес кунсенчех 1941 çулхи ялхуçалăх продукцисене йышăнса илме кăтартуллăн хатĕрленес пулать.

Республикăра утă çулма пуçларĕç. Чылай колхозсем кăçалхи çулшăн государствăна утă тăратма тытăнчĕç. Утă илекен организацисен утă хатĕрлев ĕçне тырпула пухса кĕме тухиччен вĕçлеме тăрăшмалла.

Хатĕрлев организацийĕсен кашни работникĕ — хатĕрлев ĕçĕн организаторĕ пулмалла, кашни колхоз, хуçалăх аслă Сталин радио тăрăх каланине ялхуçалăх продуктисен хатĕрлев планĕсене срокчен тултарнипе ответлемелле.

Д. МИТЬКОВ.
СССР Наркомзагĕн Чăваш АСС Республикинчи уполномоченнăйĕ.

Республикăри колхозсенче

ÇЕМĔРЛЕ. Пысăк Улхаш ялсоветĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз тырпулсене пухса кĕме хатĕрленсе çитрĕ: 3 жнейка, 2 сенокосилка юсанă, çурласемпе çавасене хатĕрлесе çитернĕ.

Çак кунсенче колхоз 200 тонна кĕмеллĕх зернохранилище туса çитерчĕ.

Фашистла вăрă-хурахсем пирĕн çĕршыв çине тапăннине ответлесе, государствăна колхоз аш-какай, çăм, сĕтçу, çăмарта памалли обязательствăсене ытлашшипех тултарчĕ.

Т. АФАНАСЬЕВ.

КАНАШ. Кăçал районри чылай колхозсем çĕрулмине яровизацилесе лартрĕç. Халĕ ĕнтĕ çав çĕрулмисем пит лайăх çитĕнеççĕ, вĕсем чечеке ларма тытăннă. Çĕрулмисем чăмăртанма пуçларĕç. Киров, Куйбышев, Максим Горький тата Шмитд ячĕпе тăракан колхозсем тепĕр 3—4 эрнерен Хĕрлĕ Çар валли государствăна çĕнĕ çĕрулми пама тытăнаççĕ.

С. ГРИГОРЬЕВ.

ИШЛЕЙ. Районри 40 колхоз государствăна çăм памалли плана çак кунсенче пĕтĕмпех тултарчĕç. Чылай колхозсем шыв хуçалăхне вăйлатас тĕлĕшпе хĕрсех ĕçлеççĕ. Ыхра-Кассинчи «Стахановец» колхозра икĕ кÿлĕ чавса, вăл кÿлĕсене карп пулăсем янă.

Г. РАЗУМОВ.
М. ГАЛКИН.

Вăрçă вăхăтĕнчи законсене тĕплĕн пăхăнса тăмалла

Юнĕçен фашистла ушкăнсем пирĕн тăван çĕршыв çине вăрă-хурахла килсе тапăнчĕç.

Партипе правительство чĕнни тăрăх пĕтĕм совет халăхĕ никам çĕнтерейми вăйпа çĕкленсе, хăйĕн тăван çĕршывне сыхласа хăварма, тăван çĕршывшăн, чысшăн, ирĕклĕхшĕн отечественнăй вăрçа тухрĕ.

Совет Союзĕнчи кашни гражданинăн халь нихăçанхи пек мар пĕр-пĕринпе тачă çыхăнни, чăтăмлă тата дисциплинăллă пулни кирлĕ. Фронтри геройла çапăçăва тылра чĕререн тăрăшса ĕçленипе пулăшмалла. Фронтпа тыл пĕрле тачă çыхăнса кĕрешсен çеç Хĕрлĕ Çар фашистла варварсене тĕппĕпех çĕмĕрсе тăкассине пурнăçа кĕртме пулать.

Пирĕн çĕршывра халь мирлĕ профессисем çук. Пĕтĕм рабочисемпе хресченсем, пĕтĕм интеллигенци, арçынсемпе хĕрарăмсем оборонăшăн ĕçлеççĕ, кашни Совет çынни халь тылра тÿрĕ кăмăлпа ĕçлесе фронтра çĕнтерÿ тума пулăшать.

Фашистла ордасене хирĕç кĕрешнĕ йывăр кунсенче паника сарма тата тылри ĕçе дезорганизацилеме пăхакансене вăрçă вăхăтĕнчи законсем тăрăх пĕр шеллемесĕр айăпласçĕ.

ССР Союзĕн оборона интересĕсемшĕн тата обществăллă йĕркелĕхпе государство хăрушсăрлăхне туса хурассишĕн СССР Верховный Совет Президиумĕ 1941 çулти июнĕн 22-мĕшĕнче кăларнă Указ тăрăх çĕршывăн уйрăм вырăнĕсенче вăрçăллă положени туса хунă.

Вăрçăллă положени туса хуни мĕне пĕлтерет тата вăл ĕççыннисене мĕн тума хушать?

Вăрçăллă положени туса хунă вырăнсенче государство влаçĕн органĕсен пĕтĕм функцийĕсене фронтсен, çарсен, çар округĕсен çар совечĕсем туса пыраççĕ, çар совечĕсем çук çĕрте—войскăсен соединенийĕсен высший командованийĕ туса пырать.

Çар влаçĕсем, вăрçăллă положени туса хунă вырăнсенче, гражданăсене оборона ĕçĕсене тума, çыхăну çулĕсене, сооруженисене, çыхăну средствисене, электростанцисене, электросетьсене тата ытти кирлĕ объектсене сыхлама, пушарсене, эпидемисене хирĕç кĕрешме ĕçлев повинноçне хутшăнтарма пултараççĕ.

Фронта тата çĕршыв оборонине тĕреклетессипе çыхăнса тăракан ĕçлев повинноçне тÿрĕ кăмăлпа пурнăçласси—кашни совет гражданинĕн, кашни совет гражданкин патриотла тивĕçлĕ ĕçĕ пулать.

Çар влаçĕсем ыйтнă тăрăх ĕççыннисем çар чаçĕсемпе учрежденийĕсене вырнаçтарса тухмашкăн хваттерсем памалла, вăрçă ĕçĕсем валли кирлĕ ĕçлев повинноçĕпе автогужевой повинноçсене тÿрĕ кăмăлпа тата вăхăтра пурнăçламалла.

Çар влаçĕсем государствăллă, обществăллă тата кооперативлă предприятисемпе организацисен, çавăн пекех тата уйрăм гражданăсенчен транспорт средствисемпе пурлăхĕсене оборона нушисем валли илме пултараççĕ.

Çар влаçĕсем учрежденисемпе предприятисен, обществăллă организацисен, вăл шутрах театрсен, киносен ĕç вăхăчĕсене йĕркелесе пыма; мĕнпур йышши пухусене, шествисене тата ыт. ĕçсене организацилессине йĕркелесе пыма; пĕр пайлă вăхăт хыççăн урамсене тухма чарма, урамри движенине чакарма, çавăн пекех тата кирлĕ пулсан шанчăклă мар, иккĕлентерекен çынсене ухтарусем тума, тытса чарма; суту-илĕве тата суту-илÿ организацийĕсен ĕçĕсене йĕркелесе пыма, çавăн пекех тата халăха продовольстви таварĕсемпе промышленность таварĕсем памалли нормăсене туса çирĕплетме; вăрçăллă положени туса хунă вырăнсене пырса кĕмешкĕн тата вĕсенчен тухса каймашкăн чарма пултараççĕ.

Хăйсен преступленилле ĕçĕсемпе халăха сиен кÿрекенсем тесе йышăннă çынсене вăрçăллă положени туса хунă вырăнтан, е унăн уйрăм пункчĕсенчен административлă йĕркепе кăларса яма çар влаçĕсене право панă. Кашни совет гражданинĕн тасa обязанноçĕ преступлени тунă тата политика тĕлĕшĕнчен шанчăксăр элементсене тупса палăртма çар влаçĕсене пулăшасси пулать.

Оборонăн Государственнăй Комитечĕн Председателĕ И. В. Сталин юлташ хăйĕн 1941 çулти июлĕн 3-мĕшĕнче радио тăрăх тухса каланă сăмахĕнче çапла каларĕ:

«Пирĕн тылри мĕнпур йышши дезорганизаторсене, дезертирсене, паникерсене, суя хыпар саракансене хирĕç пĕр шеллемесĕр кĕрешессине организацилемелле, шпионсене, диверсантсене, тăшман парашютисчĕсене пĕтерсе пымалла, çак пĕтĕм ĕçре хамăрăн истребительнăй батальонсене хăвăрт пулăшса пымалла. Çакна асра тытас пулать: тăшман—ултавлă, чее, улталас тата суя хыпарсем сарас тĕлĕшпе опытлă. Çаксене пурне те шута илмелле тата провокацисем хыççăн каймалла мар. Оборона ĕçне хăйсен паникерствипе тата хăравçăлăхĕпе чăрмантаракансене, вĕсем камне-мĕнне пăхса тăмасăрах, пурне те çийĕнчех Военнăй трибунал судне памалла».

Çар влаçĕсен пур распоряженийĕсене тата обязательнăй постановленийĕсене ял çыннисем вăхăтра тата пĕр турткаланса тăмасăрах пурнăçа кĕртсе пымалла. Совет граждăнĕсем, тăван çĕршывăн чăн-чăн патриочĕсем пулса тăраканскерсем, йĕркене пăхăнса тăмалла çеç мар, çĕршыв оборони валли пĕтĕм средствăсемпе вăя мобилизацилес ĕçре çар командованине пулăшас пулать.

Обязательнăй постановленисене пăснăшăн çар влаçĕсем ултă уйăхлăх хушши тĕрмене хупса лартса е виçĕ пин тенке çити штраф тÿлеттерсе административлă йĕркепе наказанисем параççĕ.

Çар влаçĕсен распоряженийĕсемпе приказĕсене пăхăнманшăн, çавăн пекех тата вăрçăллă положени туса хунă вырăнсенче преступленилле ĕçсем тунăшăн айăплисене вăрçă чухнехи законсем тăрăх уголовнăй йĕркепе ответ тыттараççĕ.

Çĕршыв оборонине хирĕç, обществăллă йĕркелĕхпе государство хăрушсăрлăхне хирĕç тунă пĕтĕм преступленилле ĕçсене пăхса тухма çар прокурорĕсем урлă çар трибуналĕсен тивĕçлĕ органĕсен аллине параççĕ. Вĕсем çав преступниксене пĕр шеллемесĕр ответ тыттараççĕ.

Контрреволюцилле преступленисен шутне çаксем кĕреççĕ: тăван çĕршыва сутни—шпионла ĕç, çарăн е государствăн вăрттăнлăхне пĕлтерни, тăшман енне каçса кайни; промышленноçра, транспортра, ялхуçалăхĕнче, суту-илÿре тата ытти çĕрте сăтăр тăвас шутпа тунă пур тĕрлĕ актсем; государствăллă влаçăн представителĕсене хирĕç тунă терррорла актсем; диверсисем (ишĕлтерни, взрыв туни, чĕртсе çунтарни тата ыт. те); совет влаçне хирĕçле контрреволюцилле пропаганда тата агитаци, совет влаçне хирĕç çырнă литературăсене саланни, вĕсене хатĕрлени е вăрттăн тытса усрани; контрреволюцилле саботаж е государствăллă влаçа вăйсăрлатас тесе, хăйĕн государство умĕнчи обязанноçне пĕлсе тăрсах пурнăçа кĕртменни.

Çаксем пурте—тăван çĕршыв умĕнчи йывăр преступленисем пулса тăраççĕ. Çакăн пек преступленисем тунăшăн айăплисене чи хаяр наказани — персе вĕлерсе унăн пурлăхĕсене туртса илмелле таран наказани параççĕ.

Совет Союзĕнчи управлени йĕркисене хирĕçле уйрăмăнах хăрушă преступленисен шутне çаксем кĕреççĕ: чугунçул линисене, çулйĕрсене, çыхăнун ытти средствисене ишĕлтерни, çынна вĕлерни, чĕртсе çунтарни тата ытти çавăн евĕрлĕ сиенлĕ ĕçсем туни; бандитизм—хĕçпăшаллă бандăсем организацилени тата вĕсенче хутшăнни; хĕçпăшалсене тата огневой припассене вăрттăн е куç кĕретĕнех вăрлани; транспортра ĕçлекен работниксем ĕç дисциплинине пысăккăн пăсни (движени правилисене пăхăнманни), подвижной составсемпе çула лайăх ремонтламанни; вăрçă вăхăтĕнчи условире налог тÿлесрен тата ĕçлев повинноçĕ йĕркипе ĕçлесрен пăрăнни; наци тата религи тĕлĕшпе хирĕçÿсем пуçарса ярас тесе пропагандăпа агитаци туни; укçа знакне подделка туни тата фальшивăй укçасем сарни; контрабанда, государство граници урлă законсăр каçса килме пулăшни.

Çакăн пек преступленисем тунăшăн айăплисене чи йывăр наказанисем параççĕ.

Совет Союзне хирĕç контрреволюцилле е уйрăмăнах хăрăшу преступлени тума хатĕрленни е туни çинчен пĕлсе тăнă çĕртех ун çинчен государство влаçĕсене пĕлтермен çынсене вăрçă вăхăтĕнчи законсем тăрăх хытăн айăплаççĕ.

Çар трибуналĕсем государствăллă преступленисем тунисен ĕçĕсене пăхса тухнипе пĕрлех обществăллă (социализмлă) харпăрлăха сыхласа усрасси çинчен 1932 çулти августăн 7-мĕшĕнче кăларнă закон тăрăх пăхнă преступленисем çинчен пуçарнă ĕçсене те пăхаççĕ.

(Юлашки 4-мĕш страницăра).

Хамăрăн уйхирсенчи тырпулсене пĕтĕмĕшпех сыхласа усрар, тырпулсене вăхăтра тата тăкаксăр пуçтарса кĕртер

Хĕрарăмсем — производствăна

Маттур хĕрарăмсем

Рабочисемпе работницăсем пурте хăйсен ĕç вырăнĕнче. Хăшĕсем машинăсене тĕрĕслесе пăхаççĕ, теприсем паян ĕçлеме кирлĕ материалсене хатĕрлеççĕ.

Ширшов ячĕпе тăракан артельре рабочисен ĕç кунĕ çакăн пек пуçланчĕ. Кашни рабочин, работницăн пĕр шухăш, пĕр ĕмĕт — лайăхран та лайăхрах ĕçлес ĕмĕт.

Вышивальнăй цехра ĕç тухăçлăхне ӳстерсе пырас тĕлĕшпе Ольга Воробьева, Анастасия Короткова, Мария Сурова, София Еремина юлташсем уйрăмах малта пыраççĕ. Юлашки вăхăтра вĕсем кашниех нормăсене 120—200 процент тултараççĕ. Воробьева юлташ иртнĕ уйăхра нормăна 202 процент тултарнă. Ку уйăхра вăл тата ытларах çитĕнӳ тăвассишĕн кĕрешет.

«Партизан» артельте ĕçлекен хĕрарăмсем те Сталин юлташ пĕтĕм ĕççыннисене чĕнсе каланине пысăк тимлĕхпе йышăнчĕç. Вĕсем нихăçанхинчен тимлĕрех ĕçлеме, Ленин—Сталин партийĕ тавра таччăн пĕтĕçсе тăма пулчĕç.

Халĕ кунта стахановла движени анлăн сарăлса пырать. Швейнăй цехри стахановкăсем июнь уйăхĕнчи плана ытлашшипех тултарнă. Уйрăмăнах çаксене палăртмалла: Мартынова — 153,7 процент, Кормишина — 142 процент, Шивкина — 140, Малясова — 131 процент тултарнă. Юлашки кунсенче вĕсен ĕç тĕслĕхĕсем татах та лайăхрах. Кун пек стахановкăсем ытти цехсенче те сахал мар.

Артель коллективĕ иртнĕ уйăх планне 150,6 процент тултарнă. Уйрăм цехсем татах та пысăкрах çитĕнӳ тунă. Халĕ артель членĕсем, халиччен тунă çитĕнӳсене çирĕплетсе, малашне тата лайăхрах тĕслĕхсем кăтартассишĕн, Сталин юлташ чĕнсе каланине большевикла хастарлăхпа пурнăçлассишĕн кĕрешеççĕ.

* * *

Цеха кĕрсенех тĕрлĕ станоксем шавласа ĕçленине куратăн. Квалификациллĕ рабочисемпе работницăсен алли витĕр кашни минутăра темиçе вуншар деталь тухса тăрать. Пĕрисем пĕр йышши, теприсем тепĕр йышши детальсем тăваççĕ. Çăмăлах мар кунта ĕçлеме. Техникăна пĕлмесен, çаврăнуллă пулмасан, станоксене «итлеттерме» çук.

Ответлă та сложнăй станоксем çинче ĕçлеме çак юлашки вăхăтра темиçе вуншар хĕрарăм вĕренсе çитнĕ. Станоксем çинче тахçантанпах ĕçлекенсем пысăкрах ĕçсене куçса пынă. Большакова, Борзова, Дерябина тата ытти чылай хĕрарăмсем мастерсем, бригадирсем, инструкторсем пулса ĕçлеççĕ. Наумова юлташ комбината килсе кĕнĕренпе пурĕ те икĕ çул çеç иртнĕ. Юлашки уйăхра вăл станочница пулса ĕçлет, нормăна 140 процент тултарса пырать.

Производствăра ĕçлекенсенчен чылайĕшĕ хĕрарăмсем. Вĕсем хушшинче ик-виç специальноçа вĕреннисем те пур. Темиçе специальноçпа ĕçлеме вĕренесси хальхи вăхăтра уйрăмах вăйлăн сарăлса пырать. Уйрăм работницăсем халĕ Хĕрлĕ Çар ретне кайнă арçынсем вырăнĕнче пысăк ĕç тухăçлăхĕ кăтартаççĕ. Слесарь-настройщик Крупнов вырăнĕнче халь станочница пулнă Герасимова юлташ, Антонов вырăнĕнче — Праньнова юлташ ĕçлет. Паллă стахановка, СССР Вăрман Промышленность Халăх Комиссариачĕн «Отличник соцсоревнования» значокне илнĕ Большакова юлташ станок çинче ĕçленĕ вăхăтрах слесарь ĕçне вĕренет.

Пĕрремĕш номерлĕ цехра бригадирсем пулса ĕçлекен хĕрарăмсем хăйсен нормисене ытлашшипех тултараççĕ. Ксения Данилова ертсе пыракан станочниксен бригадинче 6 çын; вĕсем пурте кашни кунах плана 1,5—2 хут иртгерсе тултараççĕ.

Перасковья Федорова малтанхи вăхăтра чернорабочий пулса ĕçленĕ. Унтан вăл, техминимум кружокĕнчен вĕренсе тухса, станок çинче ĕçлеме тытăннă. Халĕ вăл бригадир пулса ĕçлет. Унăн бригади кулленех 3—4 операциллĕ ĕç тăвать, нормăна яланах иртгерсе тултарать. Июлĕн малтанхи кунĕнчен пуçласа çак бригада членĕсем кашни кунах плана икшер хут иртгерсе тултараççĕ.

Оборонăн Государственнăй Комитечĕн Председателĕ И. В. Сталин юлташ пĕтĕм ĕççыннисене чĕнсе калани древкомбинатри работницăсене пысăккăн хавхалантарчĕ. Кашниех вĕсем аслă çулпуç сăмахне большевикла пурнăçлама кĕрешĕве тухрĕç, нихăçанхинчен те хастарлăрах ĕçлеме пуçларĕç.

Комбината кашни кунах вуншар хĕрарăм килсе тăрать. Вĕсем производствăра ĕçлеме кăмăлл тăваççĕ. Вутă складĕнче ĕçлекен Зайцев юлташ çак кунсенче Хĕрлĕ Çара кайрĕ. Тепĕр кунхех унăн арăмĕ Анна Зайцева ĕçе пырса кĕчĕ. Мария Власова, Вера Горячева, Ольга Сорокина, Клавдия Каткова юлташсем те хăйсен упăшкисем вырăнне ĕçлеме тытăнчĕç.

Х. ЛИСИН.
Çĕмĕрле. (Хамăр корр.).

Хĕрарăмсен паха ĕçĕсем

ОКТЯБРЬСКОЕ. «Хĕрарăм — колхозра пысăк вăй», — çапла каланă пирĕн учитель, çулпуç аслă Сталин юлташ. Чечейкассинчи «Аниш» колхозри колхозницăсем çак сăмахсемпе хавхаланса ĕçлеççĕ. Вĕсем кăçал 40 гектар клевер çинчи çумкурăксене çумланă, хальхи вăхăтра утă çулнă çĕрте тăрăшса ĕçлеççĕ.

Уй ĕçĕсенче кăна мар, ытти çĕрте те хĕрарăмсем тăрăшса ĕçленине курма пулать. Сурăхферминче ĕçлекен колхозница М. Петрова сурăхсене аван пăхать. Вăл кăçал 46 сурăхран 64 путек пăхса илнĕ. Ĕне ферминче ĕçлекен Е. Алексеевăпа Е. Степанова юлташсем те тăрăшса ĕçлеççĕ. Ĕнесене зоотехника вĕрентнĕ йĕрке тăрăх пăхаççĕ.

Колхозницăсене пур ĕçре те шанаççĕ. Çак кунсенче 10-мĕш класран вĕренсе тухнă М. Семенова юлташа ревизи комиссин членне суйларĕç. Нумай хĕрарăмсем тырпулсене пухса кĕнĕ чухне машиноведсем пулса ĕçлеме хатĕрленеççĕ.

Чылай колхозсенче халĕ оборона кружокĕсем ĕçлеме тытăнчĕç. Медсестра М. Павлова юлташ ертсе пынипе Кудемерти «Коммунизм» колхозра 12 хĕрача, Кив Акчурари «Ленин çулĕпе» колхозра 8 хĕрача медицина ĕçне вĕренеççĕ. Шĕнерпуçĕнчи Маяковский ячĕпе тăракан колхозри комсомолкăсем те, фельдшер А. Андреев ертсе пынипе, медицина ĕçне вĕренме тытăнчĕç. Вĕсем хăйсен пĕлĕвне практикăллă ĕçпе çыхăнтарса пыма больницăна кайса вĕренеççĕ.

В. ГРИГОРЬЕВ.
П. КОЗЛОВСКИЙ.

* * *

СОВЕТСКОЕ. Выла-Базарĕнчи «Хастар» колхозра çум çумланă çĕрте 23 звено ĕçлет. Колхозницăсем çак ĕçе тирпейлĕ тума тăрăшаççĕ. Вĕсем кулленхи нормăна тултарсах пыраççĕ. Ку тарана çитсе 17 гектар клевер, 9 гектар кĕрхи тулă, 8 гектар сĕлĕ çинчи çумкурăкĕсене çумласа тасатнă.

Çум çумлас ĕç малалла та хĕрӳллĕн пырать.

В. П.

> *Эпир Хĕрлĕ Çар тылне тĕреклетме тивĕç, хамăрăн пĕтĕм ĕçе çак ĕçĕн интересĕсене пăхăнтармалла, мĕнпур предприятисене вăйлăн ĕçлеттермелле, винтовкăсем, пулеметсем, орудисем, патронсем, снарядсем, самолетсем нумай туса кăлармалла, заводсене, электростанцисене, телефон тата телеграф çыхăнăвĕсене сыхлас ĕçе организацилемелле, сывлăшран килсе тапăнниничен вырăнта сыхланассине йĕркелесе ямалла.*
>
> ***И. СТАЛИН.***

Юлташăм, эс çакна ан ман:
Ан шухăшла наянланма, —
Тăшманшăн ан пултăр çул, —
Пур çĕрте те сыхă пул!

Кӳкеçре (Шупашкар р.) район центрĕнчи учрежденисенче ĕçлекен комсомолкăсем медицина сестрисем пулма вĕренеççĕ. **Ӳкерчĕк çинче** (сулахайран сылтăмалла): тăраççĕ — Степанова, Павлова, Степанова, Кириллова юлташсем; ларaççĕ — Сперанская, Логинова, Миронов (курсра вĕрентекен врач) тата Иванова юлташсем. М. Антонов фото-ӳкерчĕкĕ.

ТЫЛРИ ОТВЕТ

Тăшман вăрçăпа килсе тухрĕ;
Фашизм урса алхасать,
Ултавлăн пырса чикке пăсрĕ,
Советăн çĕрне хапсăнать.

Каллех темĕнчул асап-хурлăх
Кӳресшĕн тăшман кунталла.
Каллех темиçе ĕмĕр урлă
Туртасшăн пире каялла.

Пуçланчĕ хаяр, вăйлă вăрçă,
Кар тухрĕ çĕршыв çĕкленсе.
Пушар пек вут çулăм хăпарчĕ,
Таса пĕлĕтре хĕмленсе.

Ну, кам паян кун чăтса тăрĕ
— Эп хатĕр, — темесĕр, — вăрçа!

Кам чунĕ çунмасăр пултарĕ
Хӳтлесшĕн тăван çĕршыва.

Эпир кашниех кайма хатĕр
Чĕнсессĕн фронта, çапăçма.
Тылра халь ударлăн ĕçлешĕр,
Ак, тухрăмăр утă çулма.

Кашлать уйхирте тырă-пулă,
Лăпкавлă çилпе хумханса.
Тухатпăр кĕçех ăмăртуллăн,
Вырмашкăн пĕрле пухăнса.

Ĕçлер, юлташсем, çĕнтерӳллĕн,
Тăшман çывхарать вилĕме.
Çак пирĕн тылри ответ пулĕ,
Çĕнтерĕпĕр Гитлер бандине!

Иван Малгай.

Патриотла çемьесем

— Эпĕ ватă ĕнтĕ. 60 çултан иртрĕм. Анчах та манăн, иртнĕ империализмлă вăрçăра нимĕçсене хирĕç çапăçнă çынăн, Германи фашизмĕ пирĕн çĕршыв çине тапăннă вăхăтра хама ватă тесе ларма хал çитмест. Правительство чĕнсессĕнех, эпĕ ирсĕр тăшмансене хирĕç çапăçма каятăп, — тет Шăхасан районĕнчи Ушанарти Калинин ячĕпе тăракан колхоз членĕ Влас Герасимов.

Унăн икĕ ывăлĕ фронтра фашистла бандăна хирĕç çапăçаççĕ. Колхозра кун пек патриотла çемьесем татах та пур. П. Егоров колхозникăн виçĕ ывăлĕ нимĕç авантюрисчĕсене хирĕç çапăçаççĕ. Çак кунсенче унăн кĕçĕн ывăлĕ — Афанасий те фронта тухса кайрĕ.

Колхоз правленийĕ фронта кайнисен çемьисене пур енĕпе те пулăшса пырать.

И. СЕМЕНОВ.

Колхоз уборкăна хатĕр

ШĂХАСАН. Тăшмана çĕнтерме Хĕрлĕ Çар валли пурне те туса парар! Çак шухăшпа ĕçлеççĕ халь «Большевик» колхоз членĕсем. Вĕсем уборкăна пур енĕпе те хатĕрленсе çитрĕç. Колхозри машинăсене пурне те юсаса хатĕрлесе лартнă, 4 жнейка, 1 молотилка, 4 веялка уборкăна хатĕр. 4 амбара дезинфекци тума çуса тасатнă. Çĕнĕрен 162 михĕ тата шăналăксем, кĕреплесемпе сенĕксем хатĕрленĕ. Тырă турттармашкăн 6 бестарка тунă. Жнейка кӳлмелли лашасене уйрăмăн пăхаççĕ.

Кунпа пĕрлех колхозниксем государство умĕнчи обязательствăсене срокчен пурнăçлассишĕн кĕрешеççĕ. Виççĕмĕш Пятилетка (тăваттăмĕш çулхи кăларăм) Заем укçине 100 проценчĕпех тӳлесе татнă. Ытти парăмсене те пурнăçлаççĕ. Государствăна 136,58 центнер тĕштырă, 51 килограмм сĕт, 1505 çăмарта панă. Аш-какай хатĕрлевне те 100 проценчĕпех пурнăçланă.

С. СТЕПАНОВ.

Утă çулнă çĕрте

КАЛИНИНО. Юлашки çулсенче колхозсен фермисем йышлăн ӳсрĕç. Пирĕн колхозра 5 ферма. Колхоз выльăхсен шутне йышлантарса продукци нумайрах илесшĕн.

Эпир, Сăкăтри Буденный ячĕпе тăракан колхозри пионерсемпе комсомолецсем, утăна кĕске срокра тирпейлĕ пуçтарса кĕме колхозниксене пулăшатпăр. Утă çулма эпир июлĕн 8-мĕшĕнче тухрăмăр. Июлĕн 11-мĕш тĕлне Петя Вишневский 0,69 гектар, Мария Игнатьева 0,64 гектар, Елена Макарова 0,61 гектар, Алефтина Смирнова 0,72 гектар утă çулчĕç. Вĕсем кулленхи нормăна 112—127 процент таран тултарса пыраççĕ. Çавăн пекех Сережа Александров, Клава Смирнова, Вера Ксенофонтова колхозниксемпе пĕрле активлăн хутшăнса утă çулаççĕ.

Гурий МАТВЕЕВ.

> *Пирĕн пĕтĕм халăх халĕ нихçанхинчен те пĕтĕçӳллĕ тата пĕрлĕхлĕ пулмалла. Хĕрлĕ Çар, Флот тата авиаци ыйтнисене пурнăça кĕртмешкĕн, тăшмана çĕнтермешкĕн пирĕнтен кашниех хăйне тата ыттисене те чăн-чăн совет патриотне тивĕçлĕ пек дисциплинăллă, организациллĕ пулма тата хăйĕн пурнăçне шеллемесĕр кĕрешме хушмалла.*
>
> ***В. МОЛОТОВ.***

Государство умĕнчи парăмсене вăхăтра тултарни — хамăрăн тыла çирĕплетни пулать

Патриотла çĕкленӳ

ЭЛЕК. Партин XVI-мĕш съезчĕ ячĕпе тăракан колхозра пурте хĕрсе ĕçлеççĕ. Кирек ăçта пăх — унта çынсем: пĕрисем çум çумлаççĕ, теприсем утă çулаççĕ, виççĕмĕшсем тырпул пухса кĕртме хатĕрленеççĕ.

Колхоз çĕрулми хумалли пысăк подвал тума тытăннă. Прохоров, Илларионов, Филиппов, Илларионов тата Лукин юлташсем ку подвала кĕске срокра туса пĕтерессишĕн кĕрешеççĕ, хăйсен кулленхи нормисене ытлашшипех тултарса пыраççĕ.

Колхозниксен хастарлăхĕ кулленех хăпарса пырать. Кирек кама кирек мĕнле наряд пар, — вăл ăна çийĕнчех пурнăçа кĕртме тăрăшать. Степан Андреев колхоза кăçал кĕнĕ. Колхозра вăл пур ĕçе те тĕплĕн туса пырать. Халĕ витнĕ итем тунă çĕрте ĕçлет, унччен малтан вăл урапасем юсанă.

Колхоз государство умĕнчи обязательствăсене срокчен тултарса пырать. Халĕ 1941 çулшăн аш-какай тăратас плана 100 процент, çитес çулхи плана 50 процент тултарнă. Çавăн пекех кăçалхи çулшăн çăмарта, çăм тăратас плана та пĕтĕмпех тултарса çитернĕ.

— Çĕршыва, Хĕрлĕ Çара тата Тинĕс Çар Флотне тырпул, аш-какай, сĕт-çу тата ытти продуктсем мĕнчухлĕ кирлĕ, колхозсем вĕсене çавăн чухлĕ пама пултараççĕ. Эпир тыла çирĕплетсе пыратпăр. Эпир тăшмана çĕнтеретпĕр, — теççĕ колхозниксем.

Ив. МОСЕЕВ.

* * *

ИШЛЕЙ. Районри нумай колхозсем 1941 çулшăн государствăна аванс шучĕпе тырпул тата сӳс-кантăр параççĕ. Кăшавăш ялсоветĕнчи «Осоавиахим» колхоз кăçалхи çулшăн кантăр сӳсĕ тата кантăр вăрри памалли обязательствăна пĕтĕмпех тултарнă. «Новое Акрамово» колхоз та çак çулшăн кантăр вăрри парса татнă. «Парижская Коммуна» колхоз кăçалхи çулшăн 154 килограмм кантăр сӳсĕ панă.

«Правда» колхоз иртнĕ çулта туса илнĕ тĕштырăран кăçалхи çулшăн 100 центнер заготпункта леçсе пачĕ. Кибеккасси ялсоветĕнчи «Большевик» колхоз тырă тăратмалли кăçалхи обязательствăна 83 процент тултарнă.

Сыпайкас ялсоветне кĕрекен колхозсем государствăна çăмарта памалли çулталăк планне пĕтĕмпех тултарнă. Кибечкасси, Вăрман-Сĕктер, Чантăр ялсовечĕсем те ку тĕлĕшпе хытă тăрăшса ĕçлеççĕ. Паянхи кун тĕлне пĕтĕм районĕпе 30 колхоз государствăна çăмарта парса татнă.

Е. ТЮРИН.

* * *

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ. Чылай колхозсем ялхуçалăх çимĕçĕсене 1941 çулшăн срокчен малтан парса татассишĕн тăрăшаççĕ. Чапаев ячĕпе тăракан колхоз 50 центнер, Киров ячĕпе тăракан колхоз 24 центнер, «Новый путь» колхоз 88 центнер, «За урожай» колхоз 30 центнер тырă панă.

А. НИКИТИН.

* * *

ÇĔРПУ. Сталин юлташ чĕннине ответлесе, Анат-Кибеççе ялсоветне кĕрекен «Ĕмĕт» колхоз государствăна 94 центнер тĕштырă леçсе пачĕ.

Колхозниксем те государство умĕнчи парăмсене срокченех парса татаççĕ.

П. ИЛЬИН.

* * *

КАНАШ. Чиркуллĕ Аччари «Красная Армия» колхоз 1941 çулшăн çăмарта памалли обязательствăна пĕтĕмпех тултарнă. Планран иртгерсе 200 çăмарта ытлашши панă.

Çĕнĕ Акча колхозĕ те государствăна обязательство тăрăх çăмарта памалли плана ытлашшипех пурнăçланă. Киров ячĕпе тăракан колхоз аш-какай памалли плана 100 проценчĕпех тултарнă. Колхозниксем те нумайĕшĕсем государствăна аш-какай парса татнă.

С. ГРИГОРЬЕВ.
И. АРТИЗАНОВ.

* * *

ОКТЯБРЬСКОЕ. Кудемер ялсоветне кĕрекен колхозсенчи колхозниксем, рабочисемпе служащисем тата единоличниксем 1941 çулшăн государствăна çăмарта парас плана пĕтĕмĕшпех тултарчĕç.

П. КОЗЛОВСКИЙ.

* * *

СĔНТĔР. Муркаш ялсоветĕнчи колхозниксем государство умĕнчи обязательствăсене срокченех тултараççĕ. «Знамя труда» колхоз 1941 çулта аш-какай памалли плана тултарса, 1942 çулти пĕрремĕш кварталшăн та парса татнă. Çĕнĕ заем укçине 100 процент пухса перекет кассине хывнă. Çавнашкалах «Авангард» колхоз 15 центнер, Буденный ячĕпе тăракан колхоз — 30 центнер государствăна тырă леçсе панă.

И. КИРИЛЛОВ.

Уборкăна кăтартуллăн иттерсе, тăшмана хăвăртрах çĕнтерер

Пĕтĕм культурăллă тĕнче Хĕрлĕ Çар боецĕсем хăюллăн та паттăррăн çапăçнинчен тĕлĕнет. Хĕрлĕ Çар тăшмана кашни кунах аркатса тăкмаллах пырса çапать. Фашистла йыткĕтĕвĕсене хирĕç пыракан вăрçă — мĕнпур халăхăн вăрçи. Тырпул запасне пур майсемпе те ӳстерсе пырасси — ялхуçалăхĕнчи работниксен тăван çĕршыв умĕнчи хисеплĕ ĕçĕ.

Совет Союзĕнчи тĕрлĕрен районсенчен килсе тăракан даннăйсем тăрăх, кăçал тырпул пысăк тухăçлă пулмалла. Фашистла ордасене хăвăртрах çĕнтермелли условисенчен пĕри вăл — ăнса пулакан тырпула вăхăтра тата пĕр тăккаламасăр пуçтарса кĕресси пулать.

1941 çулти уборкăн хăйĕн уйрăмлăхĕ пулать, нумай районсенче çурхи тырăсем кĕрхи тырăсенчен чылай каярах пулса çитмелле.

Çурхи тырăсем каярах пулса çитни центральнăй облаçсенчи колхозсене, ĕçе тĕрĕс организацилесен, кĕрхи тырăсене çурхи тырăсене пуçтарса кĕртме тытăниччен çапса пĕтерме май парать.

Кăçал кĕрхи ыраш юлашки уйăх хушшинче, уйрăмăнах пуçа ларнă хыççăн, питĕ хăвăрт ӳссе çитĕнчĕ. Тимирязев ячĕпе тăракан ялхуçалăх академин уйхир станцийĕнче ыраш талăкра 8—9 сантиметр çӳллĕш ӳснĕ. Çакăн пек канатник е кăнтăрти кантăр кăна хăвăрт ӳсет.

Центральнăй районсенче ыраш çӳллĕ ӳснипе, выртнипе палăрса тăрать. Выртса пулнă тырпула комбайнсемпе пуçтарса кĕртес çĕрте, ытти приспособленисемсĕр пуçне, пăрçана пуçтарса кĕртме тунă приспособлени питех те усăллă, унпа выртса пулнă тырпула яланах ăнăçлăн пуçтарса кĕртме пулать. Выртса пулнă тырпула сенокосилкăсемпе пуçтарса кĕртме лайăхрах, вĕсем тырпула тĕпĕнчен вырма пултараççĕ.

1941 çулăн условийĕнче уборка хăвăртлăхне ӳстерес шутпа, кĕрхи тырăсен улăмĕ хуçалăхра ытлашши кирлĕ пулман районсенче, вăрăм çитĕннĕ тырпулăн хăмăлне чылай вăрăм хăварса вырма ирĕк панă. Анчах çĕр çумне юлакан хăмăл çӳллĕшне сыхланса ӳстермелле, ытлашши вăрăм хăварса вырсан тырпул тăккаланать.

Хăшпĕр районсенче жнейкăсем çителĕксĕр пулма пултараççĕ. Çавăн пек чухне, ман шутпа, комбайнсен хедерĕсене малтан кирлĕ чухлĕ дышлăсем хатĕрлесе лаша вăйĕпе ĕçленĕ çĕрте усă курмалла.

Иртнĕ çулсенче комбайнсемпе молотилкăсен вырăнĕнче (стационарта) сахал усă курнă. Комбайнированине пĕчĕклетнĕ условисенче комбайнсемпе молотилкăсен вырăнĕнче усă курни лайăхрах. Комбайнпа авăн çапасси нумай çăмăлланать.

Простой жнейкăсемпе тырпула ăнăçлăн пуçтарса кĕртес ĕçĕн условийĕ — вырнă турпула çийĕнчех кĕлтене çыхасси. Çак услови çумăр çуса тăнă вăхăтра обязательнăй пулмалла, çанталăк уяр тăнă чухне те çав йĕркене пăсмалла мар. Хĕвеллĕ кунсенче кĕлтене çыхман тырă хăвăрт типет, кĕлтене çыхнă чухне пучахсем ванаççĕ, тырпул нумай тăккаланать. Çыхман тырă çине çумăр çуса тăнине пула кĕлте çыхасси вăраха юлса пырать. Чăн та, çумăр çунă хыççăн тырă вырма часах тытăнма пулать, çумăр çунă хыççăнах çийĕнчех кĕлте çыхма май çук. Вырман тырă хăвăрт типет. Çумăр çусан çийĕнчех, хăшпĕр чухне икĕ сехет иртсенех, вырма тытăнмалла. Çыхман тырă тата çĕмеле хывман кĕлтесем те йĕлтах тата хăвăрт йĕпенеççĕ, анчах ерипен типеççĕ.

Пур тырпулсене пуçтарса кĕнĕ чухне те, вирсĕр пуçне, кĕлтесене çĕмеле çийĕнчех хывасси обязательнăй правило пулса тăмалла, тесе шутламалла.

Кĕлтесене тĕрлĕрен майсемпе çĕмеле хываççĕ, мĕнле майсемпе хывасси çанталăкран тата вырăнти условисенчен килет. Хăшпĕр чухне çеçенхирлĕ районсенче çийĕнчех пысăк çĕмелсем, 200—300 кĕлтерен пучахĕсене шалалла туса хывнă çурма çĕмелсем туни усăллă. Нӳрлĕ çанталăк тăракан тăрăхра, уйрăмах тырпула нӳрлĕ вăхăтра вырнă чухне, кĕлтесене майра пуçĕ текен майпа купалани çĕмелсене хĕресле майпа е пĕчĕк çĕмелсем туниченаванрах пулать. Кĕлтесене кирек мĕнле майпа çĕмеле хывнă чухне те, çилпе ӳкернĕ кĕлтесене тăтăшах тăратса лартмалла. Кĕлтесене лайăх купаласа тунă çĕмел çумăр шывне ямасть.

Вăрçă вăхăтĕнче çĕмелсене тӳрех турттарса авăн çапассине организацилесси пысăк вырăн йышăнса тăмалла. Кĕлтесем типнĕ тата тĕшĕсем хытса çитнĕ хыççăнах авăн çапма тытăнмалла. Кĕлтесем нӳрлĕ тата симĕс пулнă чухне вĕсене молотилка патне турттарса пырсан урăх вырăна хурса, çапиччен типĕтмелле. Çĕмелсене турттарса авăн çапни кĕлтесене капана хывас ĕçе чăрмантармалла мар, капанри кĕлтесене çапма уйра çĕмелсем пĕтнĕ хыççăн кăна тытăнмалла. Çĕмелсене турттарса авăн çапни, çав вăхăтрах теприсене капана хывни пачах тĕрĕс мар. Çĕмелсене турттарса ăнăçлăн авăн çапас тесен, молотилкăсене пĕр вырăнтан тепĕр вырăна куçарса, кашни пунктра 2—3 кун хушши авăн çапни питĕ пысăк вырăн йышăнса тăрать.

Хуратăпраллă мар тăрăхра уборка вăхăтĕнче витнĕ итемсене пушарсенчен сыхлама ятарласа кăтартусем хатĕрлемелле. Пушартан сыхланас ыйту хальхи вăхăтра уборка пĕтиччен çивĕччĕн тăмалла. Пушартан сыхланас шутпа çĕмелсене сайра, çĕмелсем хушшине пушă вырăн нумай хăварса тумалла, çавнашкалах çĕмелсем тата улăм куписем тавралла сухаламалла.

Тăккаланчăка хирĕç кĕрешес ĕç çине уборка вăхăтĕнче уйрăмах тимлĕн çаврăнса пăхмалла. Алăпа тата простой машинăсемпе вырнă чухне кĕлтесене çыхнă вăхăтра креплесемпе сарлакан усă курмалла. Чăн та ун пек чухне кĕлте çыхасси вăрахăн пулса пырать, анчах уйхир таса пулать. Хăшпĕр чухне ал вĕççĕн ĕçлекен креплесене лаша вăйĕпе ĕçлекен креплесемпе улăштарма пулать, тесе çирĕплетеççĕ. Çакна палăртас пулать: лаша вăйĕпе ĕçлекен креплесемпе хаярах пуçтараççĕ, çыхмаççĕ. Çавăнпа та ĕнтĕ лаша вăйĕпе ĕçлекен креплесем ал вĕççĕн ĕçлекен креплесене улăштарма пултараймаççĕ. Лаша вăйĕпе ĕçлекен креплесемпе те кĕлтесене çĕмелсене хывнă хыççăнах усă курма тытăнмалла.

Çĕмелсене тĕрĕс ретсем тăрăх лартса тухаççĕ. Çавăнпа та турттарса кайнă çĕмелсем вырăнĕнче кăна креплесемпе иккĕмĕш хут пуçтарса тухмалла.

Кĕлтесене турттарнă чухне сармалли япаласем çителĕклĕ пулма кирлĕ.

Капан хывакан вырăнти хăмăлсене малтан таптаса лапчăтмалла. Итемсем çинче капансем хывнă тата вĕсене салатнă чухне итемсене шăлса тасатас пулать.

Ытлашши типсе кайнă тырра кĕлтене çыхнă чухне тăккалас мар тесе çак ĕçе ирхине, е каçхине, сывлăм типиччен, туса иртгермелле.

Уборка планне тунă чухне кашни колхозăн ал вĕççĕн тата простой машинăсемпе тырă ăвăс пек пулса çитнĕ вăхăтра кăна пĕр тăккаламасăр пуçтарса кĕртессине шута илмелле. Тырă пулса çитсе уйра ытлашши ларнă хыççăн ăна комбайнсемпе çеç тăкаксăр пуçтарса кĕртме пулать. Çавăнпа тырпула простой машинăсемпе пуçтарса кĕртессине комбайнсемпе пуçтарса кĕниничен чылай малтан пĕтермелле.

Çак статьяра эпир уборка вăхăтĕнчи хăшпĕр ĕçсем çинче чарăнса тăтăмăр. Хальхи вăхăтра пулса тăнă обстановкăра машинно-тракторнăй станцисен тата колхозсен руководителĕсен, агрономсен тата бригадирсен тырпула чи кĕске те лайăх срокра, çавнашкалах пĕр тăкаксăр пуçтарса кĕртес ĕçре тивĕçлĕ пуçару кăтартмалла.

Уборкăна иртгерес ĕçре колхозсене çывăх ялсенчи, çавнашкалах хуласенчи шкул ачисем пысăк пулăшу пама пултараççĕ.

Хаяр тăшманпа кĕрешесси мĕнпур йышши войскăсенчи боецсенчен кăна мар, çав вăхăтрах кашни совет гражданинĕнчен мĕнпур вăя хума ыйтать. Тырпула ăнăçлăн пуçтарса кĕртни — тăшмана хăвăртрах çĕнтерме май паракан условисенчен пĕри.

Академик И. ЯКУШКИН.

Ютçĕршыв корреспонденчĕсен черетлĕ пресс-конференцийĕнче

Ютçĕршыв корреспонденчĕсен июлĕн 17-мĕшĕнче пулнă черетлĕ пресс-конференцийĕнче Совет Информаци Бюровĕн начальникĕн заместителĕ С. А. Лозовский юлташ Англипе Совет Союзĕ хушшинче июлĕн 12-мĕшĕнче вăрçăпа политика тĕлĕшĕнчен тунă килĕшӳ çине Германия тата унăн вассалĕсем мĕнле пăхни çинчен тĕплĕн каласа панă.

Çак историллĕ документ çине ала пусиччен малтанах-ха Германи пропаганди çапла каланă: пĕрле кĕрешесси çинчен Англипе Совет Союзĕ хушшинче тунă калаçусем нимĕнле результат патне те илсе пымĕç, мĕншĕн тесен «Совет Союзĕ йышăнма çук требованисем кăларса тăратнă» иккен. Çакăн хыççăн Геббельс ведомствинчи пресс-жуликсем акă мĕн çинчен панкама тытăннă: пĕрле кĕрешесси çинчен Англипе СССР калаçни хăех те «позицисем шанчăксăррине» тата «Англире шухăш-кăмăлсем çавтери начарланнине» кăтартса парать мĕн. Çавăн пек аргументсемпе англичансем ССР Союзĕпе килĕшӳ туса ала пусассине тытса чарма май çуккине курса, Германири радиопа унти хаçатсем хăйсен ĕçĕсене васкавлă майпа урăхлатса çĕнетнĕ те Англие большевизмпа хăратма тытăннă. Çакăн пек хăтланни те ăнăçлă пулман пирки, Геббельс министерстви хăйĕн речĕсене çĕнĕрен урăхлатса йĕркеленĕ те, вара июлĕн 14-мĕшĕнче: «Англипе Совет Союзĕ хушшинче тунă килĕшӳ пысăк вырăн йышăнса тăмасть», тесе пĕлтернĕ. Çак шухăша, паллах, Итали журналисчĕ Гайда та çийĕнчех ярса тытнă.

Вырăссен «куда конь с копытом, туда и рак с клешней» текен пословици тăрăх ĕçлесе, Гайда хăйĕн Берлинри обер-учителĕ хыççăн: Англипе Совет Союзĕ хушшинче тунă килĕшӳ практикăллă нимĕнле вырăн та йышăнса тăмасть, тесе пĕлтернĕ. Килĕшӳ практикăллă нимĕнле вырăн та йышăнса тăмасть пулсан, ун çинчен мĕншĕн калаçмалла-ха вара? Анчах та, «нимĕнле вырăн та йышăнса тăман» килĕшĕве хирĕç кĕрешме нимĕçсем Германири хаçатсемпе радиостанцисене тата хăйсен мĕнпур вассалĕсене çийĕнчех мобилизацилерĕç çеç мар, вĕсем тата çак ĕçре Америкăри хаçатсемпе те усă курма хăтланчĕç.

Июлĕн 14-мĕшĕнче «Юнайтед пресс» агентстви Берлинран çапла пĕлтернĕ: «Германири авторитетлă çынсем» каланă тăрăх, Англипе СССР хушшинче тунă килĕшӳ Англи плутократийĕпе совет большевизмĕ хушшинче Европăна хирĕç кĕрешмелли союз пуррине кăтартса паракан «документ» пулса тăрать» иккен.

Пуриншĕн те паллă, çак мĕнпур йыткĕтĕвĕ — Гитлер, Геббельс, Гиммлер, Риббентроп, Германири халăхпа ытти халăхсене çаратнипе пуйнăскерсем, тăраниччен апатланнă тата çынсене массăллăн вĕлернĕ хыççăн, политикăна хирĕçле декламацисем тума питех те юратаççĕ. Анчах çакă вăл пĕтĕм тĕнчене култарать çеç.

Каярахпа Германири информаци бюровĕ пире, Вашингтонран пĕлтернĕ пек туса, çапла каларĕ: Англипе Совет Союзĕ хушшинче тунă килĕшӳ «çĕннине нимĕнех те памасть тата хăлаçланни çеç пулса тăрать» имĕш. Каламасăрах паллă, çак генилле-тăмсай шухăша Бухарест çав кунах румыни чĕлхипе радио тăрăх панă.

Ун хыççăн Германири информаци бюровĕ Францири хаçатсен шухăшĕсем çинчен пĕлтернĕ: «Англипе Совет Союзĕ хушшинче тунă килĕшӳ витĕмсĕр япала çеç пулса тăрать», имĕш. Анчах Берлинри режиссерсемшĕн çакă та çителĕксĕр пек туйăннă пулмалла, вĕсем вара Испани артиллерине ĕçе яма йышăннă.

Июлĕн 15-мĕшĕнче Берлинри радиостанци англичансен чĕлхипе пĕтĕм тĕнчене çапла пĕлтернĕ: Испанири пĕр темĕнле хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Англия, Российăпа килĕшӳ туса, «хăйне цивилизациллĕ çĕршывсен шутĕнчен кăларса пăрахнă» иккен.

Мăнтарăн Английĕ! Испанири пĕр темĕнле хаçат, Геббельс хушни тăрăх, Англие цивилизациллĕ çĕршывсен шутĕнчен кăларса пăрахнă хыççăн унпа мĕн пулса тăрĕ-ши ĕнтĕ?

Анчах, çапах та Берлинра çакăн пек йышăнма шутланă пулас: Испанири вăрăмтуналла Пикадор Джон Бульшăн хăрушă пулса тăмасть. Геббельс вара хăйĕн çарне каллех урăхла йĕркеленĕ те «Дейче-дипломатиш-политише корреспонденц» урлă çапла пĕлтернĕ: «Англия, Европа çине тахçанах тăшманла пăхнăскер тата этем правине шута илменскер, халĕ Европăна пĕтĕмĕшпех пĕтерсе хураспăн» имĕш. Акă епле киревсĕр шухăшсем пур англичансен пуçĕсенче. Мĕскĕн Европа вара, Геббельсăн ирсĕр ушкăнĕнчи çынсем çивĕч куçлă пулман пулсан, пĕтсе те ларнă пулĕччĕ иккен.

Анчах та çав тĕлĕнмелле каварлашура Англия, паллах, пĕччен мар мĕн. Ăна Рузвельт пулăшать, вăл, Гитлертан ыйтмасăрах, Калинин патне сывлăх сунса телеграмма ярать. Çакă вара, — тесе çыраççĕ Геббельс тарçисем, — пĕтĕм Европăна хирĕç тăвакан каварлашу пулмасть-и-ха?

Германири мĕнпур хаçатсем, ала пуснă килĕшӳ нимĕнле вырăнта йышăнса тăмасть тесе малтанрах шавланăскерсем, сасартăках çакăн пек тема туртса кăларнă: «англичансемпе СССР Европăна хирĕç вăрçа вĕçне çитичченех туса пыма шутлаççĕ пулать. «Дейче Альгемейне цейтунг» хаçат вара тата ытларах ăссăрланса кайнă, вăл: Черчилль, Сталин тата Рузвельт «дьяволла альянс» туса хатĕрлесе «континета пĕтерсе тăкма тăрăшаççĕ», тесе пĕлтернĕ.

Çапла вара, малтан: килĕшӳ нимĕнле вырăн та йышăнса тăмасть, вăл витĕмсĕр япала çеç, тесе çырчĕç, кайран вара: килĕшӳ — континента хирĕç, Европăна пĕтерсе хума тунă каварлашу тата «дьяволла альянс» пулать, тесе çыраççи патнех çитрĕç. Ун пек чухне вырăссем çапла калаççĕ: «начал за здравие, а кончил за упокой».

Германин пропаганда министерстви çавăн пек çухалса кайса шавлани çакна кăтартса парать: Англипе Совет Союзĕ хушшинче вăрçăпа политика тĕлĕшĕнчен тунă килĕшӳ Гитлерпа унăн шайккине чĕререн пырса çапни пулса тăрать. Г. г. Черчилльпе Рузвельта большевизмшăн айăпланине илес пулсан, Англипе Пĕрлешӳллĕ Штатсенче нимĕç фашисчĕсен çак сĕмсĕр пропагандине ĕненекен ухмах идиотсем нумаях тупăнмаççĕ пулмалла. Ун пек идиотсем тупăнаççĕ пулсан, ку вара пуринчен ытла патологи енчен пулать, политика енчен мар.

* * *

Геббельс çухалса кайни Германин главнăй командованине те çухатса янă, вăл, нимĕнле логикăна та шута илмесĕр, арифметикăн тăватă правилисене те шута илмесĕр, нимĕçле хастарлăхпа кашни кунах: статистика вăл наука мар, искусство пулса тăрать, тесе кăтартса пама хăтланать.

Илер совет самолечĕсене пĕтерсе тăкни çинчен калакан даннăйсенех. Июнĕн 25-мĕшĕнче «Автонбладет» хаçат нимĕçсен даннăйĕсем тăрăх çапла пĕлтернĕ: июнĕн 22—24-мĕшсенче 1100 самолет пĕтерсе тăкнă. Гавас-ОФИ агентстви нимĕçсен çав даннăйĕсем тăрăхах 1800 самолет пĕтерсе тăкнă, тесе пĕлтернĕ. Çак цифра нимĕçсемшĕн пĕчĕккĕ пек туйăннă, вĕсем вара çак цифрăна 2.582 çити ӳстернĕ. Июнĕн 30-мĕшĕнче Римри радио: нимĕçсем советăн 4 пин самолетне пĕтерсе тăкнă, тесе тĕнчене пĕлтернĕ. Нимĕçсем вăл цифрăна 4725 çити ӳстернĕ.

Ун хыççăн нимĕçсен радиостанцийĕ çав кунах вăл цифрăна 5 пине çити ӳстернĕ, кайран ăна татах 20—25 процент чухлĕ хăпартнă. Çар обозревателĕ, подполковник Герц июлĕн 5-мĕшĕнче радио тăрăх тухса каланă чухне, советăн 5 пин самолетне пĕтерсе тăкнă тени «фантастикăллă çитĕнӳ» пулса тăрать, тенĕ. Çав çитĕнӳ—Германин сывлăш-çар вăйĕсен çитĕнĕвĕ мар, Геббельсăн тава тивĕçлĕ ĕçĕ пулса тăнине шута илсен, çакă ĕнтĕ чăннипех те фантастикăлла çитĕнӳ пулса тăрать.

Кунччен малтан подполковник Герц: ССР Союзĕнче пĕрремĕш линири самолетсем 6 пинрен ытла пур-ши вара, тесе пĕлтернине шута илсен, вара çапла пулса тухать: Германири пропаганда министерствин вăйĕсем совет авиацине пĕр самолет юлмиччен пĕтерсе тăкнă, имĕш.

Совет авиацине пĕр трукках пĕтĕмпех пĕтерсе тăкнă хыççăн, нимĕçсем йывăр положенине кĕрсе ӳкнĕ: сывлăшри çĕнтерӳсем çинчен е пачах пĕлтермелле мар пулнă, е тахçанах пĕтерсе тăкнă самолетсене кунсеренех пумайшарăн «пĕтерсе пымалла» пулнă. Нимĕçсем иккĕмĕш варианта суйласа илнĕ. Вара июлĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа июлĕн 16-мĕшне çитиччен нимĕçсем хăйсен сводкисенче кашни кун 120 пуçласа 200 самолет таран «персе антараççĕ», июлĕн 16-мĕшĕнче вĕсем: пĕр кун хушшинче советăн 700 самолетне пĕтерсе тăкрăмăр, пирĕн мĕнпурĕ те 9 самолет çеç пĕтнĕ, тесе пĕлтернĕ.

Фашистсен цифрисем мĕне тăни çинчен çакăн пек факт та каласа парать. Июлĕн 1-мĕшĕнче Германири информаци бюровĕ çапла пĕлтернĕ: июнĕн 30-мĕшĕнче аэродромсенче 114 самолет, сывлăшри çапăçусенче 48, мĕнпурĕ 162 самолет пĕтерсе тăкнă. Тепĕр кунне çав бюро июнĕн 30-мĕшĕнче 322 самолет персе антарни çинчен пĕлтернĕ. Анчах кунта суя-информаторсем хăйсен хут çинчи жертвисене рубрикăсем тăрăх мĕнле валеçсе тухнине манса кайнă: 322 самолетран аэродромсенче 114 мар, 59 самолет пĕтернĕ, зенитнăй артиллери 28 тата истребительсем 235 самолет персе антарнă иккен.

Ыйту туса тăрать: çавăн пек статистикăллă эквилибристика нимĕçсене мĕн тума кирлĕ-ха? Совет самолечĕсем пĕтнин хисепне тăватă хут тата ытларах та ӳстерсе, Геббельс мĕншĕн суять-ха вара?

Ăна Германи авиацийĕн калама çук пысăк çухатăвĕсене пытарас шутпа тăваççĕ. Çакна паллă тăвас пулать: нимĕç авиацийĕн çухатăвĕсен шутĕнче Германи халăхĕпе пĕтĕм тĕнчери халăхсем тĕлĕшпе Гитлер тăвакан ирсĕр ĕçсем çинчен эпир тĕрĕс каласа панипе персе антарнă самолетсем те кăштах пур. Çак йышши самолетсен хисепĕ, — вĕсен летчикĕсем Гитлершăн вăрçасшăн мар, — сывлăшри çапăçусенче персе антарнă нимĕç самолечĕсен хисепĕ ӳссе пынипе пĕрлех пĕрмаях ӳссе пырĕ.

* * *

Коноэ кабинечĕпе вăл Японин çĕнĕ кабинетне туса йĕркелени çине мĕнле пăхни пирки Япони корреспонденчĕ панă ыйту çине Лозовский юлташ çапла ответленĕ:

Г. Коноэ Правительстви çине Совет Правительстви мĕнле пăхнине нейтралитет çинчен пакт тунă хыççăн тӳррĕмĕнех кăтартса панă. Ун чухне пирĕн пичет, паллах, правительство шухăшне палăртса, çапла çырнăччĕ:

«Японин кун умĕнхи правительствисем хăшпĕр чухне Совет Союзĕпе ырă кӳршĕллĕ отношенисене пăхăнса тăма тата çирĕплетсе пыма кирлине шута илмен пулсан, Японин хальхи правительстви, вăл шутра министрсен совечĕн председателĕ г. Коноэ тата ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕ г. Мацуока, çакна ăнланаççĕ: Японипе СССР хушшинчи мирлĕ те ырă кӳршĕллĕ отношенисем икĕ çĕршыври халăхсене маларла аталанса тата чечекленсе пыма май паракан чи кирлĕ услови пулса тăраççĕ. («Правда», 1941 çулти апрелĕн 14-мĕш).

«Правда» хаçатăн çав статьинче Совет Правительстви г. Коноэ Правительстви çине, ун чухне пакт тунă правительство çине, кăмăлласа пăхнине кăтартнă. Çак отношени халĕ те нимĕн чухлĕ те улшăнман.

Г-н Коноэ туса йĕркелекен çĕнĕ правительство тĕлĕшпе калас пулсан, халĕ ку ыйту тăрăх хамăрăн шухăша каласа пани тĕрĕс мар туни пулнă пулĕччĕ. Ку вăл — Японин шалти ĕçĕ, ырă кӳршĕллĕ отношенисен чи пирвайхи правили — хăйĕн кӳршин шалти ĕçĕсене хутшăнманни пулса тăрать.

Англи авиацийĕ Германи тата Çурçĕр Франци çине пырса тапăнни

ЛОНДОН, июлĕн 16-мĕш. (ТАСС). Авиаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, июлĕн 16-мĕшĕнче кăнтăрла Англи авиацийĕ Роттердам докĕсенче тăракан суднăсем çине ăнăçлăн тапăннă. Малтанлăха шута илнĕ тăрăх, бомбăсем нумай суднăсем çине ӳкнĕ, вăл шутра 15 пин регистровăй брутто-тоннăллă пĕр пароход çине тата 2000 пуçласа 3000 пин тăннăна çити ытти чылай суднăсем çине те ӳкнĕ. Роттердам порчĕсенчи складсене пысăк сиен тунă. Çак операцисенчен Англин 4 самолечĕ каялла таврăнман.

* * *

ЛОНДОН, июлĕн 17-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, июнĕн 16-мĕшпе июлĕн 10-мĕш хушшинче Кельн çине бомбăсем пин тоннăна яхăн пăрахнă. Англи самолечĕсем Бремен çине 500 тонна ытла бомба пăрахнă. Çак вăхăт хушшинчех промышленноçлă Рур облаçĕ çине 2000 тонна ытла бомба пăрахнă. Кăнтăрла Çурçĕр Франци çине пырса тапăнсан Англи самолечĕсем промышленноçлă виçĕ предприяти тата виçĕ электростанци çине бомбăсем пăрахнă, нимĕçсем çав электростанцисемпе промышленноçлă предприятисене ĕçлеттерес тĕлĕшпе усă курнă пулнă. Бомбăсем пăрахнипе Лилльре виçĕ электростанцирен иккĕшĕ стройран тухнă.

Сири тĕлĕшпе Англипе Франци хушшинче тунă перемири

НЬЮ-ЙОРК, июлĕн 16-мĕш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентствин корреспонденчĕ Виширен пĕлтернĕ тăрăх, унта Англипе Франция перемири çинчен тунă килĕшĕве пичетлесе кăларнă. Çав килĕшӳре Англи войскисемпе де Голль войскисем Сирипе Ливанăн пĕтĕм территорине йышăнмаллине пăхнă. Перемири Франци войскисене хăйсен тăван çĕршывне каялла таврăнма ирĕк парать: тыткăна лекнĕ çар çыннисене пурне те ирĕке кăлараççĕ. Французсем портсене, арсеналсене, суднăсене, аэродромсене, самолетсене, горючи запасĕсене, укçа-тенкĕ средствисене, общеславăллă сооруженисене, чугунçулсемпе электростанцисене тĕрĕссипе англичансене параççĕ. Перемирие пурнăçа кĕртнине сăнаса тăма Бейрутра контрольнăй комитет тăваççĕ, унăн составĕнче виçĕ англичан тата икĕ француз пулмалла. Франци çарне демобилизациленĕ хыççăн, англичансем Ливанра войскăсене мобилизацилеме пултараççĕ. Англичансем хăйсене хирĕç тăнă çар çыннисемпе граждăнла çынсене хĕсĕрлемеççĕ.

Фашистсене хирĕçле шухăш-кăмăлсем

НЬЮ-ЙОРК, июлĕн 16-мĕш. (ТАСС). Оверсис ньюс агентствин Стокгольмри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Польшăри нацистла хаçатсем çакăн пирки ӳпкелешсе çыраççĕ: Балканри çĕршывсенчен Польшăна пырса çитнĕ нимĕç переселенецĕсем «Германие тивĕçлĕ шухăш-туйăм» кăтартмаççĕ. «Бромберген рунджау» хаçат Буковинăран тата Балканăн ытти районĕсенчен пыракан нимĕç переселенецĕсене «начар воспитани» панăшăн ӳпкелешсе çырать. Корреспондент пĕлтернĕ тăрăх, çакăн пек ӳпкелешнисем Германия Совет Союзĕ çине тапăннă хыççăн палăрма пуçланă пулмалла. Ун пек ӳпкелешсе çырнисен сăлтавне акă мĕнпе ăнлантарса памалла: Балкан тăрăхĕнчи çĕршывсенче пурăнакан нимĕçсенчен нумайĕшĕ ССР Союзне кăмăллаççĕ. Хальхи вăхăтра Германи правительстви нимĕçсене ирĕксĕрлесех тепĕр хут «воспитани» парас йĕрке тунă.

ХРОНИКА

Чăваш АССР Совнаркомĕ йышăннă тăрăх, Сергей Яковлевич **Чумуркин** юлташа Чăваш АССР Юстици Халăх Комиссарĕн заместителĕ пулса ĕçлеме уйăрса лартнă.

Германие хирĕç пыракан вăрçăра пĕрле кĕрешесси çинчен ССР Союзĕпе Великобритани правительствисем хушшинче килĕшӳ туни çинчен ютçĕршывсенче мĕн çыраççĕ

АНГЛИЯ

ЛОНДОН, июлĕн 16-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви тĕнчери лару-тăру çинчен тунă обзорта Великобританипе СССР хушшинче килĕшӳ тунине Лондонра ăшшăн кĕтсе илни çинчен каласа парать. Совет столицинче тунă килĕшӳ текстĕ çакна кăтартса парать: кирлĕ пулса тăман ыйтусене калаçусенче пурне те аякка хăварнă. Çакна палăртмалла пулнă: Англипе Россия, чи малтанах хăйсен интересĕсене шута илсе, хăйсем кашни уйрăмăн Гитлера хирĕç кĕрешме шухăшлаççĕ-и е Гитлера çĕнтерес тĕлĕшпе вăйсене пĕр çĕре пухма шухăшлаççĕ-и. Черчилль, Молотов тата Сталин тухса каланисем çакна уççăн кăтартса парăç: иккĕмĕш решенине йышăннă. Хальхи вăхăтра тухса тăракан ыйту çакăнта пулать: Англипе Российăн çынсем тата экономика тĕлĕшĕнчи резервисене хирĕç, Америкăн экономикăллă резервисене хирĕç Гитлер мĕн тума пултарĕ-ха? Çак ыйтăва хирĕç нимĕçсем халиччен: эпир «çĕнтерӳллĕ» наступлени тăватпăр, тесе ответленĕ. Анчах та вĕсем ытлашши пысăкка хапсăнаççĕ. Лондонра çапла калаççĕ: нимĕçсем, çитĕнӳсене хăварт тума шутласа, хăйсен çĕнтерĕвĕсем çинчен малтанах пĕлтернĕ. Нимĕçсем юриех пысăклатса кăтартакан пĕлтерӳсем панă, вĕсем июлĕн 13-мĕш тĕлне пысăк çитĕнӳсем тума шутласа хунă. Вĕсем хăйсен халăхне пулман çĕнĕ япала çинчен пĕлтерессшĕн пулнă.

Çак вăхăт хушшинче Англия пысăк çитĕнӳ турĕ. Вăл Сирире перемири туса Кипрпа Палестина умĕнчи хăрушлăха сирсе ячĕ.

«Ньюс кроникл» хаçатăн обозревателĕ Каммингс Англипе Совет Союзĕ хушшинче тунă килĕшӳ çинчен тапратса çапла çырать: Гитлер СССР çине пырса тапăнни миллионшар çынсене союзниксем туса хучĕ. Юлашки виçĕ эрне хушшинче Германире тата вăл оккупациленĕ территорисенче саботаж тăвасси тата вăрттăн майпа кĕрешесси вăйланнă. Çакна кĕтме пулать: Совет Союзĕпе Англи правительствисем Европăри тĕрлĕ çĕршывсенче фашизма хирĕç вăрттăн кĕрешекенсене пулăшас ĕçе пĕрле организацилĕç тата пур енчен те пулăшĕç, противника йывăр положенине кĕртсе ӳкермелле тата ăна деморализацилемелле. Хальхи вăхăтра çак вăрттăн майпа туса пыракан вăрçă питех те пысăк вырăн йышăнса тăрать.

«Ивнинг стандарт» хаçат умстатьяра çапла çырать: Англипе Совет Российăйне пĕр-пĕрнипе туслă пурăнакан союзниксем туса хуракан килĕшĕве формально ратификацилемеççĕ. Çакă вăл äслă утăм туни пулать. Икĕ çĕршывăн тачă çыхăнса тăракан интересĕсене пĕр-пĕринчен нимĕнле парламент та, нимĕнле ассамблея та хăйсен решенийĕпе хушма е пĕчĕклетме пултараймаççĕ. Çак килĕшĕве çапăçура тата ĕçре кăна ратификацилеме пулать. Совет Российĕ Совет Союзĕн кашни дюйм территорийĕшĕн кĕрешме тупа турĕ. Англи задачи çакăнта пулать: çак äслă союз тăрăх иккĕмĕш фронт тумалла. Хальхи вăхăтра вăл сывлăшра иккĕмĕш фронт тума тăрăшать. Эпир, тесе çырать автор, Совет Российĕпе тытакан союза тата Америка пулăшнине саламлатпăр.

Поляксен Лондонра тухакан «Дзенник» ятлă хаçачĕ умстатьяра Совет Союзĕпе Англи хушшинче тунă килĕшӳ çинчен çапла çырать: вăл килĕшӳ, паллах, Германие хирĕç кĕрешекенсене хавхалантарать. Пĕтĕмĕшле тăшмана хирĕç Россия вăрçа тухни пекех, Совет Союзĕпе Англи хушшинче тунă килĕшĕве те ăшă кăмăлпа кĕтсе илнĕ. Çак килĕшӳ нимĕçсене хирĕç кĕрешекен вăйсене тата ытларах тĕреклетсе пĕрлештерĕ.

США

НЬЮ-ЙОРК, июлĕн 16-мĕш. (ТАСС). Англипе Совет Союзĕ хушшинче тунă килĕшӳ çинчен хаçатсем çав-çавах çыраççĕ. «Вашингтон пост» хаçат çапла çырать: килĕшӳ — пĕтĕмĕшлĕ кĕрешӳре Англипе СССР юлташсем пулса тăнине кăтартса парать. Англин пурнăçлă интересĕ çакăнта: Россия Германие хирĕç кĕрештĕр, Российăн пурнăçлă интересĕ çакăнта: Англия Германие хирĕç кĕрештĕр. Англипе Совет Союзĕ хушшинче тунă килĕшӳ икĕ çĕршыв хăйсен тăшманне хирĕç таткăланах кĕрешме йышăнни çинчен кăтартса парать. Англипе Совет Союзĕ хушшинче тунă килĕшӳ Гитлершăн питех те пысăк йывăрлăхсем туса хурать.

«Балтимор сэн» хаçат: килĕшӳ вăрçă тĕлĕшĕнчен питех те пысăк вырăн йышăнса тăрать тата национал-социализма хирĕç СССР тимлĕн кĕрешме пулнине çирĕплетсе парать, — тесе çырать. Хĕвелтухăçĕнче фронт пулса тăни, тесе çырать хаçат, пысăк вырăн йышăнса тăрать, мĕншĕн тесен вăл нимĕçсене хăйсен вăйĕсене уйăрса тăраттарать, англичансене хăйсен çĕнĕ вăйĕсене мобилизацилеме май парать.

Провинцисенче тухакан хаçатсем те Англипе Совет Союзĕ хушшинче тунă килĕшӳ çинчен нумай çыраççĕ. Бостонра тухакан «Глоб» хаçат çапла çырать: ССР Союзĕпе Англия идеологиллĕ тата ытти разногласисене äслăн сирсе ячĕç, вĕсем: «вĕсен пĕтĕмĕшлĕ хăрушлăхĕ ытти мĕнпур проблемăсенчен пысăкрах вырăн йышăнса тăрать, тесе шутларĕç». Малалла хаçат: Англипе Совет Союзĕ хушшинче тунă килĕшӳ союз тунипе пĕртанах шутланать, тесе кăтартса парать.

«Курант» хаçат (Коннектикут штачĕ) çапла çырать: Англипе Совет Союзĕ хушшинче килĕшӳ туни акă мĕн çинчен каласа парать: «национал-социализма, вăл кирек-ăçта курăнсан та, поражени кӳме мĕн кирлисене йăлтах тăвас» шутпа Англипе СССР хăвăрт килĕшӳ турĕç

Вильмингтонра (Делавар штачĕ) тухакан «Ньюс» хаçат çапла пĕлтерет: Англипе Совет Союзĕ хушшинче тунă килĕшӳ СССР çине тапăннипе Англи халăхĕн шухăшне пăтраштарма шутланине аркатса тăкрĕ.

«Геральд» хаçат (Бостон) çак килĕшӳ пурнăçра питех те кирлĕскер пулса тăрать, тесе çырать.

ВЕНГРИЯ

ЖЕНЕВА, июлĕн 15-мĕш. (ТАСС). Англипе Совет Союзĕ хушшинче килĕшӳ тунă факт çинчен Венгрири радио шарласшăн пулман. Хăйĕн пĕлтерĕшĕпе калама çук пысăк вырăнта тăракан событи çинчен халăха пурпĕрех пĕлтерме тивнипе, Будапештри радиовещани ун çинчен пысăк мар информаци панă. Анкарара ютçĕршывсен журналисчĕсем хушшинче çапла пĕлтереççĕ: пысăк мар информаци çеç панă пулсан та, Венгри халăхĕн тĕрлĕ сийĕсем хушшинче ун çинчен хĕрӳллĕн сӳтсе-явма пуçланă.

Ютçĕршывсен журналисчĕсем аллинче Венгрири лару-тăру çинчен каласа паракан даннăйсем çителĕклĕ таранах пур. Вĕсенчен пĕри çапла пĕлтернĕ: Гитлер Совет Союзĕ çине тапăннă хыççăн тата Совет Союзне хирĕç пыракан вăрçа Венгрие вăйпах хутшăнтарнă хыççăн, Венгрири халăхăн шухăш-кăмăлĕ пусăрăнса çитнĕ.

Англипе Совет Союзĕ хушшинче килĕшӳ тунине хаваслăн кĕтсе илеççĕ. Иккĕленмелли çук: гитлеризма тата Гитлерăн Венгри халăхне пусмăрта тытса усракан шайкине пĕтерсе тăкас ĕçе майлă самантра венгерсем те активлăн хутшăнĕç.

Вăрçă вăхăтĕнчи законсене çирĕппĕн пăхăнса тăмалла

ЮЛАШКИ

Çавăн пекех тата çар служащийĕсем тунă преступлениллĕ ĕçсене, вăрă-хурахла тата пĕр-пĕр паллă тĕллевпе вĕлерсе айăпа кĕнĕ çынсен ĕçĕсене, государство умĕнче преступлени туса айăпа кĕнĕ çынсене хупса лартмалли çуртсенчен тата хуралласа тăнă çĕртен вăйпа ирĕке кăларнă пирки панă ĕçсене, пурне те тивĕç çар обязанноçĕнчен пăранни, хĕçпăшала законсăр сутăн илнĕ, сутнă тата тытса усранă пирки пуçарнă ĕçсене пĕтĕмпех çар трибуналĕсем пăхса тухаççĕ.

Спекуляци туни çинчен, усал шухĕшпа хулиганла ĕçсем туни çинчен тата ытти преступлениллĕ ĕçсем çинчен пăхса тухма, вăрçăллă положени обстоятельствисем тăрăх çакна тума кирлĕ пулсан, çар трибуналĕсене пама СССР Верховный Совет Президиумĕн Указĕ çар влаçĕсене право парать.

СССР Верховный Совет Президиумĕ 1941 çулти июнĕн 22-мĕшĕнче «Вăрçăллă положени çинчен» Указ кăларнă хыççăнхи вăхăт çакна кăтартса пачĕ: совет патриочĕсемпе патриоткисем революциллĕ сыхăлăха çирĕплетсе пыраççĕ, преступлениллĕ ĕçсене тупса палăртма власть оргăнĕсене активлăн пулăшаççĕ. Çак вăхăт хушшинче вăрçăллă вăхăтри закона пăсакансем вĕсем ĕççынĕсен интересне хирĕçле, класс тăшманĕсем енне таяннă çынсем çеç пулни лайăх курăнчĕ.

Германи фашизмĕ пирĕн тăван çĕршыв çине ултавлăн килсе тапăннине пула килсе тухнă чрезвычайнăй положени тата тăшмана отпор памашкăн ССР Союзĕнчи халăхсен мĕнпур вăйĕсене хăвăрт мобилизацилеме кирлĕ пулни государствăн пĕтĕм влаçне пĕр оргăн аллинче пĕтĕçтерсе тăмалла тума ыйтрĕç. Çавăн пек оргăн вăл Оборонăн Государственнăй Комитечĕ пулса тăрать, ăна СССР Верховный Совет Президиумĕ, ВКП(б) Центральный Комитечĕ тата СССР Совнаркомĕ 1941 çулти июнĕн 30-мĕшĕнче кăларнă постановлени тăрăх организациленĕ. Оборонăн Государственнăй Комитечĕн пуçĕнче Сталин юлташ тăрать. Пирĕн çĕршывăн оборони, государствăн пĕтĕм ĕçĕсене туса пырасси çирĕп, пултаруллă тата шанчăклă алăра тăрать.

Çавăн пекех, вăрçă вăхăтĕнчи законсен шутне вăрçă вăхăтĕнче рядовой тата кĕçĕн начальство составĕнчи военнослужащисен çемьисене пособисем памалли тата тӳлемелли йĕрке çинчен, тата рабочисемпе служащисен ĕç вăхăчĕн вăрçă вăхăтĕнчи режимĕ çинчен СССР Верховный Совет Президиумĕ 1941 çулти июнĕн 26-мĕшĕнче кăларнă Указĕсем те кĕреççĕ. Вăл Указсем мĕнле вырăн йышăнса тăни пуриншĕн те паллă.

Урса кайнă тăшмана хирĕç пирĕн Хĕрлĕ Çарăн боецĕсемпе командирĕсем фронтра хăйсен пурнăçне шеллемесĕр кĕрешсе, хăйсен таса тивĕçлĕхне пурнăçа кĕртеççĕ. Пирĕн çĕршыври ĕççыннисем тылра халĕ ĕç тухăçлăхне хăпартассишĕн, фашистла разбойниксене хирĕç кĕрешме Хĕрлĕ Çар валли мĕн кирлисене пурне те туса парассишĕн пысăк хастарлăхпа кĕрешеççĕ. Совет Союзĕнчи ĕççыннисем вăрçă вăхăтĕнчи законсене тӳрĕ кăмăлпа тата пĕр пăркаланса тăмасăр пурнăçа кĕртессишĕн те çавăн пекех пысăк хастарлăхпа кĕрешмелле. Законсене пĕр пăркаланса пымасăр пурнăçа кĕртсе пыни çеç çитмест, законсене пăсакансене вăхăтра тупса палăртма пĕлни кирлĕ, вĕсене çийĕнчех тăрă шыв çине кăлармалла, преступниксене вăхăтра палăртса, вĕсене совет влаçĕн аллине памалла.

Вăрçă вăхăтĕнчи законсене пурнăçа тӳрĕ кăмăллăн кĕртессишĕн кĕрешесси пĕтĕм совет патриочĕсен хисеплĕ ĕçĕ пулса тăрать. Революциллĕ законсене пĕтĕм çирĕплĕхпе пурнăçа кĕртсе пырассишĕн, йĕркелĕхшĕн, дисциплинăшăн кĕрешсе пыни—ССР Союзĕнчи кашни гражданин тăшмана пĕтĕмĕшпех çĕнтерессишĕн кĕрешни пулать.

К. МОКИЧЕВ,

ССР Союзĕн прокурор заместителĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Казанский меховой техникум Наркомлегпрома СССР

объявляет осенний прием на 1941—42 учебный год на 1 и 2 курсы.

Обучение платное—150 руб. в год.

Техникум готовит техников-технологов мехообрабатывающей промышленности а) по выделке и окраске мехов, б) по изготолению меховых изделий.

Имеются русские и татарские группы.

Прием заявлений до 10 августа. Условия приема в техникум—общие для всех техникумов. Заявления подаются на имя директора. К заявлению должны быть приложены документы в подлинниках: свидетельство о рождении, свидетельство об окончании средней школы, справка врача о состоянии здоровья, три фотокарточки автобиография.

Окончившие семилетку на „отлично" принимаются в техникум без испытаний и зачисляются на стипендию.

От платы за обучение освобождаются: дети пенсионеров, воспитанники детдомов и материально-нуждающиеся студенты-отличники.

При техникуме имеется библиотека, обеспечивающая студентов всей необходимой учебной, справочной, а также художественной литературой.

Нуждающимся предоставляется платная работа в свободное от учебы время в мастерских техникума.

Зачисленные в техникум обеспечиваются общежитием, полным комплектом постельных принадлежностей, баней за счет техникума. При техникуме имеется студенческая столовая и прачечная.

Начало занятий с 1 сентября.

АДРЕС: Казань, уг. Островской—Университетской, д. 39/6. Меховой техникум. Тел. 13-92.

3—3 ДИРЕКЦИЯ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редактор заместителĕн — 3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, ялхуçалăхĕпе промышленность пайĕсен — 0—88, çырусемпе рабсельнорсен пайĕн — 2—30, дежурнăйăн — 6—23, «Ленин çулĕпе» журналăн — 0—85, издательство конторин—0—23.

НТ 2557. Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР, Заказ Ь 345, ф. 6 58 84 п. л.